ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Май 24 ВЫРСАРНИКУН № 100 (9009)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Уй-хир ĕçĕсенче тракторсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе тухăçлăн усă курар (1 стр.).
ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани (2 стр.).
Лекцилле пропаганда пахалăхĕшĕн (2 стр.).
Шкулсенчи экзаменсем (2 стр.).
М. Якимов. — Çĕртме сухи — çак кунсенче тумалли ĕç (2 стр.).
П. Григорьев. — Никита Яковлевич Бичурин (3 стр.).
Халăха медицина пулăшăвĕ парассине тăтăшах лайăхлатса пырар. Чăваш республикинчи медицина работникĕсен активĕ пухăвĕнчен (3 стр.).
Я. Мазор.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем пирки (4 стр.).
Бирма çарĕсемпе Чан Кай-ши бандисем хушшинчи çапăçу (4 стр.).
Арçынсен баскетбол командисен Европăра мала тухмалли ăмăртăвĕ (4 стр.).

Колхозсене конкретлăн, ĕçе пĕлсе ертсе пымалла

Кирек хăш хуçалăхра та, кирек мĕнле организацире те чи кирлĕ тата çав вăхăтрах чи ответлă ĕç вăл—ертсе пырас ĕç пулса тăрать. Ертсе пырас ĕç ыйтăвĕ—колхозăн е МТС-ăн ĕçри ăнăçлăхне татса паракан ыйту. Колхоз председателĕ е МТС директорĕ ĕçе тата вырăнти ларутăрава пĕлсе ертсе пыраççĕ пулсан кăна вĕсем ăнăçлăхсем тума, малта пыма пултараççĕ.

Ертсе пырас тени вăл—кантурта ларса приказсем, кăтартусем памаллине çеç пĕлтермест. «Решени йышăнса алă пуснă, çынсене чĕнсе ятлана, халĕ ĕнтĕ ĕç пулать», тесе шутлакан работниксем пысăк йăнăш тăваççĕ. Вĕсем ертсе пырас ĕçе питĕ çăмăл ĕç вырăнне, нимĕн те пĕлмесĕрех туса пыма май пур ĕç вырăнне, канцелярийче шавласа ларнипех пулакан ĕç вырăнне хураççĕ. Çавăнпа вара вĕсем «пĕтĕмĕшле» кăтартусем парса «пĕтĕмĕшле» ертсе пыраççĕ, ĕçе тĕплĕн тăвас вырăнне ăна çиелтен шăйăрттарса тухаççĕ. Кунта пĕр тĕслĕх илсе кăтартни те çителĕклĕ. Хĕрсе çураки пынă вăхăтра Сĕрпÿ районĕнчи «Родина» колхоз председателĕ П. А. Архипов юлташ вăхăта ларусемпе тĕрлĕ канашлусенче иртернĕ е хăнана çÿренĕ. Колхоз уй-хирĕсенче, бригадăсенче тата фермăсенче пулман, пулсан та унта ĕç мĕнле пынипе тĕплĕн паллашман. Çавăнпа та райком бюровĕн ларăвĕнче вăл хăйсен колхозĕнче çураки ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен, кам мĕнле ĕçлени çинчен нимĕн те каласа пама пултараймарĕ. Ку çеç те мар, Архипов юлташ колхоз производствин пĕр ыйтăвне те тĕплĕн пĕлмест, çĕре мĕн таранăш сухаламаллине, мĕн таранăш культиваци тумаллине, мĕн чухлĕ вăрлăх тата мĕн таранăш акмаллине, норма тăрăх пĕр кунта мĕнле ĕçе мĕн чухлĕ тумаллине,—çак чи кирлĕ те чи çăмăл ыйтусене те пĕлмест. Паллах, Архипов юлташ пек «пĕтĕмĕшле» ертсе пынипе колхоза малалла кăларма çук.

Çакăн пек руководительсем пур-ха ытти колхозсенче те, вĕсем Сĕрпÿ районĕнче уйрăмах чылай палăраççĕ. Вĕсем çакна ăнланмаççĕ: ертсе пырас тени вăл,—чи малтан, хушнă ĕçе тĕплĕн вĕренсе пĕлмеллине, ăна вĕренсе алла илмеллине, унăн законĕсене пĕтĕмĕшпех вĕренсе çитсе ĕçре шута илмеллине пĕлтерет. Сана колхоза ертсе пыма хушрĕç пулсан, эсĕ колхоз производствине тĕплĕн вĕренсе пĕл, агрономи мĕн хушнисене тата малта пыракансен опычĕ мĕн каланине пĕлсе тăр, санщăн пĕлмен ыйтусем ан пулччăр,—çавăн чухне тин эсĕ лайăх руководитель пулма пултаратăн.

Ертсе пырас тени вăл, тепĕр енчен, хăвăн пĕлÿсемпе ĕçре, практикăра ăнăçлăн усă курма пултармаллине, тепĕр майлă каласан, ĕçе организацилесе, йĕркелесе пымаллине пĕлтерет. Тепĕр чухне ĕçе лайăх пĕлекен руководительсем те кая юлса пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ыттисене вĕрентме, вĕсен ĕçне кирлĕ пек организацилеме тăрăшмаççĕ, хутсем çырса лараççĕ, çав хутсем çине ытларах шанаççĕ. Сĕрпÿ районĕнчи «Дружба» колхозăн председателĕ пулнă Алексеев шăпах ĕнтĕ çавăн пек меслетпе ертсе пынă. Вăл, хăй ялхуçалăх специалисчĕ пулнă пулин те, колхоз хуçалăхне юхăнтарса янă, колхоз кантурĕнчен нарядсем парса ларнипех ĕç пулать тесе шутланă.

Партин XIX-мĕш съездĕнче, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри ситменлĕхсемпе йăнăшсене палăртса, Г. М. Маленков юлташ колхозсене шаблонпа, ячĕшĕн кăна ертсе пырассине пĕтерме кирлине асăрхаттарчĕ. Кашни колхоза конкретлăн, унăн уйрăмлăхĕсене, унăн ситменлĕхĕсемпе лайăх енĕсене пĕлсе ертсе пымалла. Колхозсен ĕçне вăтам цифрăсем тăрăх хаклас йăлана пĕтермелле. Колхозсенче ĕçе организацилес тата хуçалăха тирпейлĕн тытса тăрас ыйтусем халĕ уйрăмах кирлĕ ыйтусем пулса тăраççĕ. Çавăнпа пĕрлех, вăйлă тырпул туса илес тесе, çĕреç культурине пĕрмаях ÿстерсе пымалла. Ку вара акă мĕне пĕлтерет: кашни колхозрах пусă çаврăнăшсем пулмалла; унта курăксем акса тăвассине йĕркелесе ямалла; лайăх вăрлăх тата сеялкăпа хĕреслĕ майпа, ансăр ретпе акмалла; çĕре таран та лайăх сухаламалла; тырпулсене искусственнăй майпа шăркалантарас меслетпе усă курмалла; çĕре тислĕкпе тата минераллă удобренисемпе лайăх çемçетмелле; тăпрана извĕçлес ĕçе йĕркелемелле; çĕртме пуссисенче çĕрулми туса илес опыта сарса пымалла тата ытти агротехника ĕçĕсене те тумалла.

Анчах пĕр çĕрĕçне кăна мар, пĕтĕм ялхуçалăхне квалификациллĕн ертсе пымалла, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсен культурине ÿстернĕçемĕн ÿстерме тăрăшмалла. Çапла тăвас тесен, парти райкомĕсемпе райисполкомсен, чи малтан, колхозсене ертсе пырас ĕçе пултаруллă та вăя шеллемесĕр ĕçлекен юлташсене тупса лартас ĕçе пурнăçа кĕртмелле, иккĕмĕшĕнчен, çав юлташсене куллен тата конкретлăн вĕрентсе, пулăшса пымалла. Çакна вара чылай районсенче курма çук-ха.

Паллă ĕнтĕ, колхозсене ертсе пырас ĕçе кашни суйлав хыççăнах çĕнĕ çынсем чылай хутшăнаççĕ. Вĕсем нумайăшĕ артель Уставне, колхоз производстви çинчен Правительство кăларнă постановленисемпе директивăсене тахçан пĕрре вуланă та манса кайнă. Çавăнпа вĕсен пĕлĕвĕсем çителĕксĕр, уйрăмах колхозри ĕçе организацилес енĕпе вĕсен ăнланманнисем нумай. Сăмахран, ĕçшĕн хушса тÿлес йĕркесене, фермăри ĕçе организацилемелли йĕркесене, звеносем пирки тăракан ыйтусене тата ыттине те Сĕрпÿ районĕнчи чылай колхозсен председателĕсемпе бригадирĕсем тата ферма заведующийĕсем çеç мар, районти хăшпĕр ответлă работниксем те пĕлмеççĕ. Çавăнпа вĕсем те колхозсене «пĕтĕмĕшле» ертсе пыраççĕ. Ăнланмалла ĕнтĕ, çавăн пек ĕçе пĕлмесĕр ертсе пыни колхозсем кая тăрса юласси патне кăна илсе пыма пултарать. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен тата МТС-сен ертсе пыракан работникĕсен, колхозсене ăнăçлăн ертсе пырас тесен, колхоз производствин законĕсемпе вăл хушнисене чи малтан хăйсен тĕплĕн вĕренсе пĕлес пулать, суккăррăн мар, пуласçине малтанах витĕр курса ертсе пыма вĕренсе çитес пулать. Çапла тума хушать пире партин Центральнăй Комитечĕ.

Пирĕн умра пур колхозсене те вăйлăн аталантарса, чечеклентерсе пырас задача тăрать. Çак пысăк задачăна пурнăçа кĕртме колхозсене ĕçе пĕлсе ертсе пыни, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне султан çулах ÿстерсе пыни кирлĕ. Çакă вара кашни уйрăм ĕçе тĕплĕн те вăхăтра туса пыма хушать. Колхозсене вăйлатма, колхозниксен пурнăçне лайăхлатма пулăшакан хальхи чи кирлĕ ĕç вăл—çуртрисене вăхăтра та лайăх акса хăварасси пулать.

Çак енчен илсен, Комсомольски, Чкаловски, Шупашкар, Канаш, Кувакино, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсен ĕçне мухтамалла. Вĕсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акмалли плана иртерсе тултарчĕç. Уйрăмах çакна палăртмалла: кăçал ку районсенчи колхозсем паха тырă—тулă акмалли тата выльăх апачлĕх курăксем акмалли плана чылай иртерсе тултарнă.

Çапах та, пĕтĕмĕшпе илсен, çураки ĕçĕсем республикăра çителĕксĕр хăвăртлăхпа пыраççĕ-ха. Пăрачкав, Çĕмĕрле, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне районĕсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Ку районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен колхозсенче çураки ĕçĕсене хăвăртлатас тĕлĕшпе халех конкретлă мерăсем йышăнас пулать.

Республикăри колхозсенче техникăлла культурăсем акас, çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартас ĕçсем уйрăмах вăраха кайрĕç. Уяр çанталăк тăнипе усă курса, çак питех те кирлĕ культурăсене паян-ыранах акса-лартса пĕтермелле. Çураки планне пур культурăсем тăрăх та кашни колхозрах тултарма тăрăшмалла.

Уй-хир ĕçĕсенче тракторсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе тухăçлăн усă курар!

Çуртри акса пĕтернĕ районсем

ЕЛЧĔК, майăн 22-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районти колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем, нумай çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕçсем тата силос культурисем акмалли государство планне майăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Тулă акмалли плана 104 процент, нумай çул ÿсекен курăксем акмалли плана 109 процент тултарнă. Колхозсем çĕрулми лартас ĕçе массăллăн туса пыраççĕ. МТС-ăн машина-трактор паркне ирхи çĕртме тума куçарнă.

* * *

МУРКАШ, майăн 23-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районти колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем, нумай çул ÿсекен курăксем акмалли государство планне майăн 21-мĕшĕнче тултарчĕç. Тулă акмалли плана 100 процент, пăрçа йышши тырăсем акмалли плана 104 процент, нумай çул ÿсекен курăксем акмалли плана 102 процент тултарнă.

Çавăн пекех районти колхозсенче пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли, тымарçимĕç акмалли, силос тумалли культурăсем акмалли плана та тултарнă. Тракторсемпе ĕçлемелли плана 110,6 процент, акмалли плана 101 процент тултарнă, вăл шутра хĕреслĕ майпа акмалли плана 107 процент тултарнă. Тракторсемпе халĕ ирхи çĕртме сухалама тытăннă. Колхозсем çĕрулми лартаççĕ, кантăр акаççĕ.

* * *

ВĂРМАР, майăн 23-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районти колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акмалли государство планне майăн 22-мĕшĕнче 100 процент тултарчĕç, тулă акмалли плана 103 процент тултарнă. Вăл шутра ансăр ретлĕ майпа 1.500 гектар акнă. Нумай çул ÿсекен курăксем акмалли плана 109 процент, силос тумалли культурăсем акмалли плана 121 процент, пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли плана 106 процент тултарнă.

Халĕ пур колхозсем те çĕрулми тата пахча çимĕçсем лартаççĕ, ирхи çĕртме сухалаççĕ. «Дружба» колхоз ирхи çĕртме сухаламалли плана тултарнă.

* * *

СĔНТĔР, майăн 23-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районти колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акмалли государство планне майăн 16-мĕшĕнче тултарчĕç. Тулă акмалли плана 110 процент, пăрçа йышши культурăсем акмалли плана 102 процент тултарнă, силос тумалли культурăсене 200 процент, нумай çул ÿсекен курăксене 115 процент акса хăварнă. Колхозсем пурте çĕрулми лартаççĕ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешсе

Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз членĕсем вăйлă тырпулшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ.

Çураки ĕçĕсем пуçланас умĕн производство бригадисем кашни кунах уй-хирте юр ирĕлсе пынине астуса тăчĕç. Юр ирĕлсе пĕтнĕ уйрăм участоксенче çураки ĕçĕсене пуçласа ячĕç. Малтанах 244 гектар çинче ыраш калчине органикăллă тата минераллă удобренисем сапса пачĕç, тăпрари нÿрре сыхласа хăварас шутпа тăпра çийĕ кăшт типме тытăнсанах ыраш калчине тата кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сÿрелерĕç.

Çуракинче сухалакансем, акакансем, сÿрелекенсем малтанхи кунсенчен пуçласах ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырассишĕн тăрăшрĕç. Яковлев ертсе пыракан бригадăри 13 ретлĕ сеялкăпа акакан Е. Матвеевăпа А Ларионов колхозниксем 4 гектар акас вырăнне кашни кун 9—10-шар гектар акса пычĕç. Çавăн пекех Сергеевпа А. Русскин бригадисенчи Каменевпа Сергеев колхозниксем те кашни кун акмалли плана ытлашшипех тултарса пычĕç.

Сеялкăсемпе татти-сыппиcĕр усă курас шутпа кашни 3—4 сехет иртсен лашасене улăштарса кÿлсе ĕçлерĕç.

Куславкка МТС-ĕн трактор бригади кăçал, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, нумай лайăх ĕçлесе пырать. Бугреев бригадир тракторсем ĕçленĕ çĕртен кайма пĕлмерĕ. Вăл машинăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса-астуса тăчĕ, трактористсен ĕçне йĕркелесе тăчĕ Н. Ларионовпа К. Ларионов трактористсем смена нормине 120—130 процент тултарса пычĕç. Трактор бригадипе уй-хир бригадисем таччăн килĕшсе ĕçлерĕç. Сеялкăсене чарăнса тăма парас мар тесе, вăрлăха трактора чармасăрах сеялка ещĕкне ярса пычĕç.

Бригадирсем те пĕрмаях хирте пулса, колхозниксене ĕçри кăлтăксене, çитменлĕхсене çийĕнчех тÿрлетсе пыма пулăшрĕç. Каçхине ĕçлеме чарăнсан кĕске канашлусенче кун каçиччен туса иртернĕ ĕçсене пăхса тухса, колхозниксене çураки ĕçне тăпрара нÿрĕ пур чухне васкаса иртермеллине астутарса пычĕç. Сергеев, Яковлев тата Русскин юлташсен бригадисем тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсене майăн 10-мĕше тĕлне 5 кун хушшинче акса пĕтерчĕç. П. Беловпа Н. Трофимов юлташсен бригадисем те тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсем акмалли плана 7 кун хушшинче тултарчĕç.

Кăçал колхоз хирĕнче кĕрхи çĕртме сухине çуркунне тепĕр хут сухалани пулмарĕ. Çуртыррисем акас умĕн тăпрана культиваци тунă Çапла тăпрари нÿрре сыхласа хăварма тăрăшрăмăр.

Тĕш тырă культурисен сортлă вăрлăхне пĕтĕмпех яровизацилесе, имçамсемпе çуса, кĕрхи çĕртме туса хатĕрленĕ уя трактор сеялкисемпе акнă. Çурхи тулла пĕтĕмпех хĕреслĕ майпа акнă Культиваци тунă вăхăтра пысăк çĕр лаптăкне суперфосфат тата ытти удобренисем хывнă.

Колхозăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх нумай. Артель членĕсем выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада 8 гектар тымарçимĕç, 83 гектар пĕр çул ÿсекен курăксем акса хăварчĕ. 223 гектар çинче иртнĕ çулсенче акса хăварнă нумай çул ÿсекен курăксем пур.

Халĕ хăмла тата сапа пахча çимĕç ÿстерекен бригадăсенче хĕрÿллĕ ĕç пырать.

«Динамо» колхоз членĕсем çак кунсенче çĕрулми лартса, кантăр акса пĕтерессишĕн тăрăшса ырми-канми ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах хире тислĕк турттарса, май уйăхĕнче çĕртме сухине туса пĕтерме тăрăшаççĕ.

Яковлевпа Сергеев бригадисем çĕрулми лартса пĕтерчĕç, халĕ çĕртме пуссине тислĕк кăлараççĕ. Ытти бригадăсем те çак кунсенчех çĕрулмине лартса пĕтереççĕ.

А. КУЛАЕВСКИЙ,
колхоз агрономĕ.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ТАТА ЫТТИ МАШИНАСЕМПЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
1953 çулхи майăн 20-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Мĕн пурĕ ĕçленĕ	Çуртри акнă	Вăл шутра ансăр ретлĕ тата хĕреслĕ майпа акнă
Сурмайдан	34	93	417
Шăмăршă	28	95	68
Улатăр	27	80	128
Шупашкар	27	92	107
Ишлей	25	107	330
Пăрачкав	24	66	175
Çĕрпÿ	23	83	42
Йĕпреç	23	102	100
Элĕк	22	81	85
Кувакино	22	88	86
Сĕнтĕрвăрри	21	90	47
Чкаловски	21	96	107
Куславкка	21	100	60
Комсомольски	20	104	60
Сĕнтĕр	20	86	149
Канаш	20	90	42
Вăрмар	19	101	148
Калинино	19	73	57
Елчĕк	19	77	41
Тăвай	19	90	82
Муркаш	18	101	107
Шăхасан	18	94	93
Октябрьски	18	79	62
Первомайски	18	86	100
Хĕрлĕ Чутай	18	55	56
Чурачăк	18	94	101
Советски	18	76	77
Етĕрне	17	64	131
Çĕмĕрле	16	62	56
Вăрнар	16	79	100
Сиява	16	33	71
Красноармейски	14	58	38

Улăх-çарансене лайăхлатаççĕ

ВĂРНАР. Районти Хрущев ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «1-ое Мая» колхозсенче улăх-çарансен тухăçлăхне ÿстермелли агротехникăлла ĕçсене çулсеренех тимлĕ туса пыраççĕ. Çавна май иртнĕ ик-виçĕ çул хушшинче вĕсен çаранĕсем çинче курăк тухăçлăхĕ палăрмаллах ÿсрĕ. 1950 çулта улăхсенче гектартан вăтам шутпа 11,7 центнер утă пухса кĕртнĕ. Улăх-çарансене çулсерен лайăхлатса пынă май утă тухăçлăхĕ 1951—1952 çулсенче 18—22 центнера çити ÿснĕ.

Малтан асăннă колхозсенче халĕ çарансем çине минераллă тата вырăнти удобренисем сапаççĕ. Гектар çине лайăх çĕрнĕ тислĕк 15—20 тонна, шыва хутăштарнă тислĕк шĕвекĕ 10—20 тонна, калиллĕ удобренисем 0,8—1-шер центнер е кĕл 5—6-шар центнер, фосфорит çăнăхĕ 4—5-шер центнер сапаççĕ.

Н. МИХАЙЛОВ.

Ирхи çĕртме туса пĕтеретпĕр

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Партизан» колхоз çураки ĕçĕсене майăн 18-мĕшĕнче вĕçлерĕ. Пур культурăсене те агротехника тĕлĕшĕнчен пысăк пахалăхпа акса хăвартăмăр. Колхозра ĕçлекен трактор бригади (бригадирĕ В. Егоров юлташ) çуракинче хăйĕн заданине 110 процент тултарчĕ.

Трактор бригади майăн 18-мĕшĕнче ирхи çĕртме тума тытăнчĕ. П. Михайлов, Г Михайлов, Т. Христофоров, И. Матвеев трактористсем, талăкра икĕ сменăпа ĕçлесе, майăн 23-мĕшĕ тĕлне 116 гектар ирхи çĕртме турĕç. «СХТЗ» тракторпа ирхи çĕртмене 22—23 сантиметр таранăш, «ДТ-54» тракторпа 25—27 сантиметр таранăш тăватпăр.

Иртнĕ çулта эпир ирхи çĕртме сухине майăн 31-мĕшĕ тĕлне туса пĕтернĕ. Кăçал çак ĕçе майăн 25-мĕшĕнче пĕтĕмпех вĕçлетпĕр.

В. КУЗЬМИН,
колхоз агрономĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

С. И. ФЕДОТОВĂНА ЧĂВАШ АССР ШКУЛĔН ТАВА ТИВĔÇЛЕ УЧИТЕЛĔН ХИСЕПЛĔ ЯТНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

Халăха вĕрентес ĕçре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Сĕнтĕрвăрринчи ялхуçалăх техникумĕн преподавательницине—София Ивановна Федотовăна Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне парас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕшĕн **Д. МИТЬКОВ.**

Шупашкар хули, 1953 çулхи майăн 21-мĕшĕ.

Çĕрулмине машинăпа лартаççĕ

ЧУРАЧĂК. МТС кăçал илсе килнĕ «СК-2» маркăллă машинăпа колхозсенче çĕрулми лартать. «Красное Сормово» колхозра Н. Ефимов ертсе пыракан трактор бригади виçĕ кун хушшинче 20 гектар çĕрулми лартнă. Вара «Прожектор» колхоза ĕçлеме куçрĕ.

МТС механизаторĕсем ку машинăпа ĕçлеме лайăх вĕренчĕ. СХТЗ тракторпан çĕрулми лартакан икĕ «СК-2» машина кăкарса, кашни сменăри задание ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Колхозсенчи уй-хир бригадисем механизаторсене ĕçе тухăçлă та паха туса иртерме пулăшса пыраççĕ.

И. КОНСТАНТИНОВ.

Тăван çĕршывра

Çĕршыври уй-хирсенче

СТАЛИНАБАД. Çанталăк лайăх тăнă май тĕштырăсем хăвăрт ÿсеççĕ. Урпа пĕрчисем ăвăс пек писсе çитнĕ, тулă чечеке ларнă. Дангарински районĕнчи колхозсем Таджик ССР-ĕнче пуринчен малтан урпа вырма тытăннă. Комбайнпа вырса кашни гектартан 18—20 центнер урпа пухса илеççĕ. Таджикистанăн кăнтăр енчи ытти районĕсенче те колхозниксемпе механизаторсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленсе çитеççĕ.

ПЕТРОЗАВОДСК. Карело-Финн ССР-ĕнче хĕрсех çураки тăваççĕ. Нумай трактористсем сменăри нормăна 1,5—2 хут тултараççĕ. Çуртыррисем лайăх шăтса тухаççĕ.

БРЯНСК. Брянск облаçĕн кăнтăр енчи районĕсенчи колхозсем кантăр акма тытăннă. Çак культурăна пĕлтĕрхинчен 1,5 пин гектар ытларах акса хăвараççĕ.

СЫКТЫВКАР. Коми АССР-ĕнчи нумай районсенче çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартма тытăннă. Сыктывкар, Ухта, Печера тата Воркута çывăхĕнче пахча çимĕçпе çĕрулми нумай лартаççĕ. Республикăри совхозсем кăçал çĕрулмипе пахча çимĕçсем иртнĕ çулхинчен 1,5 хут ытларах лартса хăвараççĕ.

ТЮМЕНЬ. Ново-Заимка, Юргинское, Байкалово тата ытти районсенчи колхозсемпе совхозсем пĕлтĕрхинчен вунă кун малтан çурхи тулă акса пĕтернĕ. Пĕтĕмпех сортлă вăрлăхпа акнă. Уй-хирсенче калчасем парка шăтса тухнă.

ПЕНЗА. Облаçри колхозсем ир акакан çуртыррисене пĕлтĕрхинчен маларах акса пĕтернĕ. Тулă план тăрăх палăртнинчен 32 пин гектар нумайрах акса хăварнă. Тулла пĕтĕмпех сортлă вăрлăхпа, пуринчен ытла хĕреслĕ майпа тата ансăр ретпе акнă.

Майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС).



Киргиз ССР-ĕнче пысăк водохранилище—Орто-Токой водохранилищи тăваççĕ. Водохранилищĕре пухăнса тăракан шывпа, ăна канал тăрăх ярса, кирлĕ вăхăтра уйри тырпула шăвармалла пулать. Кунта сăрт çинчен кĕрлесе юхса анакан Чу ятлă юханшыва пĕвелеççĕ, вара водохранилище пулса тăрать.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пĕве тумалли вырăна тасатса хатĕрлеççĕ.
(ТАСС фотохроники).

Конструкторсем тепловоз йывăрăшне чакараççĕ

ХАРЬКОВ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Харьковри транспорт машиностроени заводĕнчи конструкторсем «ТЭ-2» тепловоз йывăрăшне чакарассишĕн, тепловоз лайăхрах ĕçлемелле тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Инженерсен ушкăнĕ, заводăн главнăй конструкторĕ Сталинла премри лауреачĕ Кирнарский юлташ ертсе пынипе, чылай детальсен конструкцине улăштарнă. Çавна май çулталăкра 200 тонна ытла прокат перекетленсе юлать. Конструкторсем прокат тунă метала перекетлĕрех кассмалли май тупнă. Перекетлĕ кассан кашни тепловоза тума 100 килограмм сахалрах металл каять. Ĕнер заводра локомотивăн рессор узелне çĕнĕ чертежсем тăрăх тума пуçланă. Рессор узелĕн йывăрăшĕ 50 килограмм чакнă.

Кашни тепловоз йывăрăшĕ пĕр тонна яхăнах чакать. Çĕнĕ тепловозпа юсамасăр 100 пин километр, малтанхи вăхăтринчен 25 пин километр ытларах çÿремелле пулать.

Пĕр МТС-ри çынсем

СЛОБОДЗЕЯ (Молдаван ССР-ĕ), майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Глинянски МТС комбайнерĕ С. В. Гордиенко хăй ĕçлекен «Сталинец-6» комбайнпа Булганин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн уйне тухнă. Вăл кăçалхипе 21-мĕш çул колхоз тыррине пухса кĕртет. Унпа пĕрле комбайн çинче çамрăк механизатор—унăн 18 çулхи ывăлĕ Андрей ĕçлет. И. В. Шеремет, А. И. Тодорашко тата ытти комбайнерсем те кăçалхипе 21-мĕш çул колхозсен хирĕнче тырпул пухса кĕртеççĕ. Глинянски МТС ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулнипе кăна мар, кадрсем улшăнманнипе те пĕтĕм Молдавире паллă. Машина-трактор станци коллективĕнчи работниксен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ кунта вуншар çул тата ытларах та ĕçлет.

Машина-трактор станцине организациленĕ кунтанпах И. Ф. Евсеев юлташ ертсе пырать. МТС тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çитĕнÿсем тунăшăн ăна Ленин орденĕпе наградăланă. И. Иванченкăпа Г. Черненко бригадирсем, М. Кирка, Т. Цирфа, Ф. Шевченко, А. Полтореску трактористсем, старший механик И. Павлинин тата ытти нумай работниксем 20 çул ытла ĕçлеççĕ.

Машина-трактор станци колхоз производствинче тĕп вăй пулса тăнă. Таврари колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕн 80 процентне ытла механизаторсем тăваççĕ. Уй-хирти, çавăн пекех садсенчи ĕçе пĕтĕмпех механизациленĕ. Пахча çимĕçсем лартнă, выльăх апачĕ вĕтетсе хатĕрленĕ, виноградниксене пăхнă çĕрте машинăсемпе усă кураççĕ.

МТС механизаторсен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлет. Колхозниксемпе колхозницăсем 28 çын курсра дизелистсем, комбайнерсем тата скреперистсем пулма вĕренеççĕ.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

Нумаях пулмасть Канаш хулинче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă.

Чугун çул транспорчĕнче нумай вăхăт лайăх ĕçленĕшĕн Юдино уйрăмĕнче ĕçлекен ревизора М. А. Николаев юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă. Пăравуссен деповĕн машинисчĕсем Г. А. Седойкин, Н. С. Семенов «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Финанспа кредит системинче нумай вăхăт лайăх ĕçленĕшĕн Государство банкĕн Вăрмарти уйрăмĕн кассирне С. В. Васильева, Государство банкĕн Канашри уйрăмĕнче ĕçлекен Ялхуçалăх банкĕн уполномоченнăйне Н. В. Мамакин-Валентинова, Государство банкĕн Канашри уйрăмĕнче главнăй бухгалтер пулса ĕçлекен И. Т. Смирнова, Государство банкĕн Канашри уйрăмĕн кассирне Г. Ф. Филиппова, Госстрахăн Тăвай районĕнчи инспекцийĕн аслă бухгалтерне Е. Г. Христофоровăна «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль панă.

Государство банкĕн Канашри уйрăмĕн аслă кассирĕ Е. В. Байдерякова, Канаш районĕнчи финанс пайĕн главнăй бухгалтерĕ Н. С. Герасимова, Госстрахăн Шăхасан районĕнчи инспекцийĕнче инспектор пулса ĕçлекен Т. И. Игнатьев, Канашри финанс пайĕн аслă инспекторĕ Х. Ф. Игнатьева тата ыттисем те «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Канашри 13-мĕш номерлĕ шкулти учительница М. Д. Федотьева «Хисеп палли» орден, Канашри 29-мĕш номерлĕ вăтам шкулти учительница Е. С. Голубева, Вăрмар районĕнчи Кивĕ Вăрмарти сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница И. В. Егорова, Йĕпреç районĕнчи Пучинкери сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница О. П. Ильина, Канаш районĕнчи Йăлмаччари пуçламăш шкулти учительница М. Е. Маркова, Комсомольски районĕнчи Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнчи шкулти учительница В. Ф. Морозова, Канаш районĕнчи Тури Юнтапари пуçламăш шкулти учительница О. М. Струхова «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

З. А. Андреева юлташ наград илнисене саламланă, малашнехи ĕçре ситĕнӳсем тума ырă суннă.

* * *

Çак кунсенче Советски райсовет исполкомĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум Председателĕн заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе ССР Союзĕн медалĕсене панă.

Нумай вăхăт лайăх ĕçленĕшĕн Государство банкĕн Етĕрнери уйрăмĕн аслă кассирĕ Ф. П. Щетинин юлташ «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ. Советски районĕнчи тĕп перекет кассинчи главнăй бухгалтера М. А. Алексеева юлташа, Госстрахăн Етĕрне районĕнчи инспекцийĕн аслă бухгалтерне З. П. Алферова юлташа, Элĕк районĕнчи финанс пайĕн аслă бухгалтерне З. И. Быков юлташа, Государство банкĕн Советскинчи уйрăмĕн аслă инспекторне И. И. Иванов юлташа тата ыттисене те «Ĕçре палăрнăшăн» медаль панă.

Етĕрнери вăтам шкулти учительница Е. А. Почуева «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль, Элĕк районĕнчи Таватри сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница М. А. Алексеева, Элĕк районĕнчи Вылари пуçламăш шкулти учительница Н. И. Ермакова, Етĕрне районĕнчи Талуйри пуçламăш шкулти учительница П. Л. Лаврентьева тата ыттисем те «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Д. Я. Митьков юлташ наград илме тивĕçлĕ пулнисене саламласа, малашнехи ĕçре ситĕнӳсем тума ырă суннă.

Шкулсенчи экзаменсем

Советскинчи вăтам шкултан кăçал 72 çамрăк вĕренсе тухать. Малтанхи экзаменсем пур классенче те ăнăçлăн иртрĕç.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Вуннăмĕш класра вĕренекен В. Куралев, Т. Алексеева тата Р. Ефимова физикăпа экзамен пама хатĕрленеççĕ. Вырăс чĕлхипе пулнă экзаменра вĕсем виççĕшĕ те лайăх паллăсем илнĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хĕрачасен шкулĕнче

Экзаменсем пуçланни тăватă кун ситрĕ. Çак кунсенче ачасем хăйсем лайăх вĕреннине кăтартса параççĕ.

...Шупашкарти хĕрачасен пĕррремĕш номерлĕ шкулĕнчи тăваттăмĕш «А» класра вĕренекенсем «Çулла—шыв хĕрринче» ятлă темăпа диктант çырчĕç.

Вырăс чĕлхипе лайăх вĕренесси—чыслă та хисеплĕ ĕç. Çакна вĕренекенсем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та диктантри кашни сăмаха лайăх шухăшласа, тимлĕн çырчĕç. Класри 40 вĕренекентен 26 хĕрача «5» паллă, 13 хĕрача «4» паллă, 1 хĕрача «3» паллă илчĕç. Ку класри хĕрачасене Екатерина Александровна Семенова учительница вĕрентет. Вăл педагогика ĕçĕнче çирĕм пилĕк çул хушши ĕçленĕ.

Улттăмĕш класра вĕренекенсем те экзаменран хаваслăн тухаççĕ. Савăнмалли пур çав! Вĕсем арифметикăпа çыру ĕçĕ иттерчĕç. Задачăсемпе примерсене пурте тĕрĕс шутларĕç. Класри 33 вĕренекентен 17 хĕрача «5» паллă, 15 хĕрача «4» паллă, 1 хĕрача «3» паллă илчĕç. Ку класс руководителĕ пулса С. В. Лебедева учительница ĕçлет.

Анчах экзаменсене начартарах хатĕрленнĕ класс палăрчĕ. Ку шкулти тăваттăмĕш «Б» класра та «Çулла—шыв хĕрринче» ятлă диктант çырчĕç. Кунта 39 хĕрачаран 9 хĕрача «5» паллă. 13 хĕрача «4» паллă, 15 хĕрача—«3» паллă илчĕç. Икĕ хĕрачи вара «2» паллă илнĕ. Вĕсем экзамена кирлĕ пек хатĕрленмен. Юлса пыракансене çийĕнчех асăрхаса пулăшу паман.

В. АЛЕНДЕЕВ.

Малтанхи результатсем

ИШЛЕЙ. Майăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти 32 шкулта пуринче те экзаменсем йĕркеллĕ пуçланчĕç. Вĕренекенсем экзаменсене лайăх хатĕрленнĕ.

Ишекри вăтам шкулти 10-мĕш класран 33 ача вĕренсе тухмалла. Вырăс чĕлхипе сочинени çырса, ку класра вĕренекенсенчен ултă ача «5» паллă, 19 ача «4» паллă, 8 ача «3» паллă илнĕ. Начар паллă илнисем çук.

Ишлейри вăтам шкулта та экзаменсем йĕркеллĕ пыраççĕ. Шкулти 10-мĕш классенчи 55 ачаран 15 ача «4» паллă, 27 ача «3» паллă илнĕ. Анат Кĕнерти сичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Е. Елькин юлташ) тăваттăмĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе диктант çырчĕç. Класри 27 ачаран 16 ача «5» тата «4» паллăсем илнĕ. Сыпайкассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти тăваттăмĕш класра вĕренекен ачасем пурте çыру ĕçне пысăк ăсталăхпа тунă.

Анчах хăшпĕр шкулсенче экзаменсен результачĕсем çителĕксĕр. Мăналти сичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Томасова юлташ) тăваттăмĕш класра вĕренекен тăватă ача малтанхи кун экзамена пыман. Ку класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе диктант çырнă, вĕсен пĕлӳ çителĕксĕрри палăрнă. Ку вăл учитель С. Петров юлташ ачасене вырăс чĕлхине вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлениинчен килнĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, шкулсенче экзаменсем пысăк ăнăçлăхпа пулса пыраççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

ПĔЛӲ ÇИТЕЛĔКЛĔ

ОКТЯБРЬСКИ. Районти шкулсенче 4.027 вĕренекен экзамен тытать. Кăçал 4-мĕш классенчен — 832 ача, 7-мĕш классенчен 70 ача, 10-мĕш классенчен—168 ача вĕренсе тухмалла. Экзаменсем шкулсенче ăнăçлăн иртсе пыраççĕ.

Малтанхи экзаменсем вĕренекенсем çителĕклĕ пĕлӳ илнине уççăнах кăтартрĕç. Шĕнерпуçĕнчи И. Яковлев ячĕпе тăракан вăтам шкулта 10-мĕш классенче 45 ача вĕреннĕ. Вĕсене пурне те экзамен тытма ирĕк панă. Экзаменăн пĕррремĕш кунĕнче вырăс чĕлхипе сочинени çырса 28 ача «5» тата «4» паллă, ыттисем «3» паллă илчĕç. Çак шкулти пиллĕкмĕшпе тăваттăмĕш классенче вĕренекенсем те çирĕп пĕлӳ илнине кăтартрĕç. Хуракассинчи вăтам шкулти 10-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе лайăх çырнă.

Çĕньял Пукашри сичĕ çул вĕренмелли, Туппай Сĕмĕлĕнчи, Аслă Кăршкари, Илменкассинчи пуçламăш шкулсенче те малтанхи экзаменсем начар мар результатсем пачĕç.

В. ТРОФИМОВ.

Çĕртме сухи—çак кунсенче тумалли ĕç

Республикăри пур районсенче те сураки тăваççĕ. Тĕштырă акса пĕтернĕ колхозсен шучĕ кунтан-кун ӳссе пырать.

Çураки ĕçĕсемпе пĕрлех çĕртме сухи тăвас ĕçе анлăн туса пымалла. Çĕртме сухи—тырпул тухăçлăхне ӳстермелли пысăк майсенчен пĕри. Чи лайăх çĕртме сухи май уйăхĕнче сухалани пулать.

Çĕртме сухи—тăпрара нӳрĕ тытса, юлма тата калчасене ӳсе çитĕнме кирлĕ япаласене пухса пыма пулăшать. Çĕртме сухи, çавăн пекех тата, сумкурăксене пĕтермелли чи лайăх майсенчен пĕри пулса тăрать.

Çĕртме сухи агротехника тата организацилле-хуçалăхла ĕçсем тĕлĕшĕнчен те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл кĕрхи акi срокĕсене нумай чакарма, çапла вара, ытти ĕçсене те, сăмахран, кĕрхи çĕртме сухине те вăхăтра тытăнса вăхăтра иртterme пулăшать.

Малта пыракан колхозсенче çĕртме сухине çуркуннех иртерех тăвасси йăлана кĕнĕ. Вĕсем кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, çĕртме сухине вăхăтра тума тытăнчĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозсем халех ĕнтĕ çĕртме тумалли çĕр лаптăкĕн виççĕмĕш пайне сухаланă. Шăмăршă районĕнчи колхозсенче те çĕртме сухи тăвасси иртнĕ çулхинчен лайăхрах пулса пырать.

Апла пулсан та, çĕртме сухи тăвасси çине пур çĕрте те тивĕçлипе пăхаççĕ, тесе калама çук. Республикăри чылай районсенче ку тарана çитсе те çак ĕçе тума тытăнман. Уйрăмах çĕртме сухи тăвасси Кувакино, Çĕрпӳ, Пăрачкав, Ишлей районĕсенче питех те вăраххăн пырать. Куславкка, Октябрьски, Сĕнтĕр, Советски районĕсенчи колхозсем çĕртме сухи тума тытăнман та.

Республикăри чылай районсенче çĕртме сухи тăвасси çакăн пек кая юлса пынине мĕнрен килет-ха? Чи малтан, ку вăл ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сем çителĕксĕр ертсе пынинчен килет. Чылай çĕрте халĕ те уй-хирти ĕçсене черетпе туса пырас сиенлĕ йĕркене пĕтермен. Красноармейски райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ тата МТС директорĕ çĕртме сухи пĕтĕм ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăн тумалли ĕç, тесе шутлаççĕ. Çавăнпа та кунта çĕртме сухине чи юлашки вăхăта хăвараççĕ. Ĕç çине çакăн пек пăхнипе килĕшме çук. Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи ялхуçалăх органĕсен руководителĕсем çĕртме тăвасси кая юлса пынине тракторсемпе лашасем пĕтĕмпех çураки тунă çĕрте ĕçлеççĕ, тесе ăнлантарма пăхаççĕ.

Пур ĕçсене те пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарса туса пымалла,—çакă пулать ĕнтĕ колхозсене тĕрĕс ертсе пыни. Колхозсене тĕрĕс, пĕлсе ертсе пырас тени район пурнăçне, колхозсен пурнăçне тĕплĕн пĕлес тенине, кая юлакан колхозсене вăхăтра пулăшас, шалти резервсемпе туллин усă курмалла тăвас тенине пĕлтерет.

Çĕртме сухи тăвас ĕç юлса пыракан районсенчи ялхуçалăх пайĕсемпе колхозсен руководителĕсен паян-ыран мĕнпур уй-хир ĕçĕсене çĕнĕлле йĕркелесе тухмалла, мĕнпур ĕçсене пĕр вăхăтра туса пыма мерăсем йышăнмалла.

Çĕртме сухи ĕçĕсене ăнăçлă иртерме кирлĕ паха условисенчен пĕри трактор паркĕ тухăçлă тата пĕр тикĕс ĕçлени пулать. Çав вăхăтрах республикăри чылай МТС-сем çак условие пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли чылай ĕçсене туса çитермен-ха. Çĕртме сухине йышăннă çирĕп графикпа тăрăх туса пымалла. Райсовет исполкомĕсем çирĕплетсе панă плана кашни колхоза, кашни трактор бригадипе уй-хир бригадине çитермелле. Кашни тракторпа, кашни лашапа мĕн чухлĕ ĕç тумаллине кăтартса памалла, правительство планĕсене ăнăçлă тултарасшăн социализмла ăмăрту организацилемелле. Тракторсем ĕçсĕр ларни пулмалла мар, ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, лашасемпе ытларах усă курмалла.

Çĕртме сухине вăхăтра, тарăн, шăйрăксем хăвармасăр сухаламалла. Çак йĕркене пур çĕрте те пĕр пăрăлланмасăр пурнăçласа пымалла. Ку ĕçре ялхуçалăх специалисчĕсен ответлăхĕ уйрăмах пысăк. Вĕсен тивĕçĕ—çĕртме сухи пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси пулать.

Çĕртме сухине 20—22 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар, предплужниклă плугсемпе сухаламалла. Суха касси хыççăн икĕ йĕр сӳрелесе пымалла. Тăпран сухалакан сийĕ 20 сантиметртан каярах пулсан, кун пек чухне ирхи çĕртмене тăпран сухалакан сийне 3—4 сантиметр тарăнлатмалла. Тарăн тымар яракан çумкурăксем пусса илнĕ участоксене уйрăмах тарăн сухаласа хăварни кирлĕ. Кун пек участоксене 24—25 сантиметр тарăнăш сухаласа хăвармалла.

Шурути пусса илнĕ участоксене предплужниклă плугсемпе 20—22 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар сухалас пулать.

Кăçал пирĕн республикăри колхозсем кĕрхи тулă нумай акма тытăнаççĕ. Кĕрхи тулă—уйрăмах ачаш культура. Ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сен агрономĕсен колхозсене кĕрхи тулă акма уйăрнă вырăна чи малтан çĕртме сухи туса хăварма хушмалла. Мĕнле пулсан та ку ĕçе май уйăхĕнчен кая хăвармасăр туса пĕтермелле.

Çĕртме сухи тунипе пĕрлех, кĕрхи тырăсем акма уйăрнă участоксем çине тислĕк тата минераллă удобренисем кăлармалла. Çĕртме анисем çине кăлармалли тĕп удобрени—тислĕк. Тислĕкпе пĕрлех, ирхи çĕртме умĕн уя известь, фосфор çăнăхĕ ытларах кăларма тăрăшмалла. Извеспе фосфор çăнăхĕ йӳсĕк тăпрашăн уйрăмах усăллă.

Тислĕкпе фосфор çăнăхне тата извеçе сухалас умĕн салатса пăрахмалла. Тислĕке вара салатса пăрахнă хыççăн çийĕнчех сухаласа хăварни кирлĕ. Унсăрăн тислĕк пахалăхĕ чакма пултарать. Вăрлăхлăх кĕрхи тулă тата ыраш акма лайăх çĕр участокĕсем уйăрса илме пулăшас пулать. Кĕрхи тулă акма уйăрнă участоксем çине тислĕк гектар пуçне 30—40 тонна, фосфор çăнăхĕ 6—8 центнер, йӳсĕк тăпрасем çине известь 1—3-шер тонна таран тăкмалла. Ытти участоксем çине те 20—30 тоннăран кая мар тислĕк, 6—8 центнертан кая мар фосфор çăнăхĕ, йӳсĕк тăпра пулсан 1 тоннăран кая мар известь кăлармалла.

Кĕрхи тырăсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çĕртме пуссине çумкурăксенчен таса тытни тата ăна тăтăшах кăпкалатса тăни пысăк вырăн йышăнать.

Çĕртме сухи тумалли плана тултарасси—тырпул тухăçне ӳстерме, хамăрпа кӳршĕллĕ тăванла республикăсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртура мала тухма кирлĕ паха условисенчен пĕри. Çĕртме сухи тумалли государство планне пысăк пахалăхпа тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

М. ЯКИМОВ,
Ялхуçалăх министерствин агрономĕ.

Государствăна—выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

ЕТĔРНЕ. Районти чылай колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли çулталăкри плана срокчен тултарма тăрăшаççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çак çулта государствăна аш-какай памалли плана тултарчĕ. Буденный ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ 22 пин литр, Маленков ячĕпе тăракан колхоз 29 пин литр сĕт панă. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз çămarta парса татрĕ.

В. СИДУГАНОВ.
Г. МЫТИКОВ.

Хаçатсем çинчен вулакан мĕн çырать

Куçарнă чух тунă йăнăшсем

Пирĕн умра «Çамрăк коммунист» хаçатăн 35-мĕш номерĕнче пичетленнĕ «Телейлĕ тĕлпулу» калав. Ăна вырăсларан куçарнă. Тӳрех калас пулать: куçаракан та, редакци те ку ĕç çине кирлĕ пек пăхман.

«Пулĕм вĕçĕнче тăракан хĕрĕн сутă куçĕсем çамрăк офицерăн сиелти сй-пуçне кăмăллăн пăхса илчĕç» тени тĕрĕс мар. «Сиелти» сăмахпа «çи» сăмахăн уйрăмлăхĕ çук.

Малалла тата çапла çырнă:

«Капитан куçĕсенчен пĕрхĕнсе тухакан сутă пайăркисем ирхи хĕвел сутти пек йăлкăшса тăраççĕ», тенĕ.

Эпир ку таранччен куçсенчен сутă пĕрхĕнтерсе тăракан çын курман, ун пек çын пурри çинчен калани те илтмен.

* * *

Хаçатăн 39-мĕш номерĕнче 2-мĕш страницăра «Пĕр-икĕ сăмах культура çинчен» ятлă статья пичетленнĕ.

«П. Емельянов хускатнă ыйту хальхи вăхăтра кирлĕ ыйту пулса тăрать», тесе пуçланать статья. Емельянов ыйту мĕн çинчен хускатнă? Паллă мар. Апла пулсан, ку предложени статьян пуçламăшĕ те мар. Шкулта учитель урока çак статья пек пуçласан, ачасене ăнланма питĕ хĕн пулнă пулĕччĕ.

Малалла статьяра: «Çавăнпа та манăн пирĕн çамрăксем хăйсене обществăлла вырăнсенче мĕнле тыткаламалли çинчен пĕр-икĕ сăмах калас килет», тенĕ.

Паллах, «Çавăнпа та манăн çамрăксене хăйсем обществăлла вырăнсенче мĕнле тыткаламалли çинчен пĕр-ик сăмах калас килет» тенĕ пулсан, ăнланма çăмăлтарах пулатчĕ.

Малалла тата: «Этемĕн пурте илемлĕ пулмалла», тенĕ. Ăстан сухалса юлнă сыпăк-ши ку? Мĕнле ăнланас пулать ăна?

Эпир çамрăк çыннăн культурине унăн сăмсине, тутине, хăлхине, чĕлхине пăхса хакламастпăр, калаçăвĕнче туйма пултаратпăр.

«Нумай пулмасть манăн акă мĕн курма тӳр килчĕ: пĕр ватăрах хĕрарăм тротуар çинче ури шуса кайнипе ӳкрĕ. Ун хыçĕнчен пыракан икĕ çамрăк çын, пĕрпĕр аслă шкулсенче вĕренекенскерсем пулмалла, ун çине пăхмасăрах иртсе кайрĕç, ăна ура çине тăратасси çинчен шутламарĕç те»,—тенĕ статьяра. Çакна ĕненес килмест.

Совет аслă шкулĕнче вĕренекенсем çав териех туйăмсăр пулĕ-ши вара? Апла мар пулĕ тесе шутлатпăр эпир.

Статьяра автор коммунизмла мораль ыйтуне тĕплĕн сутатса парас задачăран пăрăнса, çăмăл та пăсăк çул çине тăнă. Коммунизмла мораль ыйтăвне хаçатра тĕрĕс çутатма ăста специалистсене ытларах хутшăнтарнă пулсан, аванрах пулнă пулĕччĕ.

П. СКВОРЦОВ.

Юлашки почтăран

Тимлĕх пулман пирки

Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат (редакторĕ Н. С. Квасов) хăйĕн 29-мĕш номерĕнче И. Храмовпа М. Абукин çырнă «Комсомолецсен класĕсем» ятлă заметкăна пичетлесе кăларнă. Унта çакăн пек вырăн пур:

«Асанкассинчи 7 çул вĕренмелли шкулта 7 «а» тата 7 «б» классем пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕренеççĕ».

Партипе правительство шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи социализмла ăмăртăва тахçанах пăрахăçа кăларнă. Çав постановление «Октябрь ялавĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем маннă пулас.

Лекцилле пропаганда пахалăхĕшĕн

Çак кунсенче Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн Чăваш уйрăмĕнчи членĕсен республикăри пĕрремĕш конференцийĕ пулса иртрĕ.

Унта обществăн Чăваш уйрăмĕн правленийĕн председателĕ **Евлампьев** юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн Чăваш уйрăмĕ,—терĕ докладчик, — 1948 çулхи декабрь уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Малтанлăха унта действительнăй членсем 73, член-соревнователĕсем 12 пулнă. Халĕ Чăваш уйрăмĕ 839 действительнăй члена, 474 член-соревнователе пĕрлештерсе тăрать. Членсен шутне тата тăхăр коллектив кĕрет. Вĕсем республикăри пысăк предприятисемпе пысăк учрежденисенче ĕçлеççĕ.

Общество ĕçлеме пуçланăранпа унăн членĕсем халăх хушшинче 14 пин лекци вуланă, çав лекцисене пĕр миллион та виççĕр пин çын ытла итленĕ.

Докладчик палăртса хăварнă тăрăх, лекцилле пропаганда ĕçĕнче И. В. Сталинăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă произведенине тĕплĕн ăнлантарса пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав чаплă произведени чĕлхе наукине çĕнĕлле çутатса пачĕ, наукăн ытти отраслĕсене аталантарса пыма пулăшрĕ.

1952 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа лекцилле пропагандăра И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçĕ тата КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх иртернĕ лекцисем уйрăмах пысăк вырăн йышăнчĕç. Çак иртнĕ сур çул хушшинче обществăн лекторĕсем И. В. Сталинăн генилле ĕçĕ çинчен 403 лекци, съезд материалĕсем çинчен 653 лекци иртернĕ.

И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçне тĕплĕн вĕренес шутпа, районсемпе хуласенче 12-шер лекцирен тăракан 54 цикл йĕркеленĕ.

Лекцисене хуçалăхпа культура строительствинчи кулленхи задачăсемпе çыхăнтарса пынă. Çакна тума правлени президиумĕ лекцилле пропагандăн темисене тĕрлĕ енĕсемпе те усă курнă. Иртнĕ çулта кашни тунтикун çамрăксем валли ятарласах лекцисем иртернĕ. Кунсăр пуçне, Пионерсен çуртĕнче ачасем валли ятарласах лектори йĕркеленĕ. Унта хулари ăста педагогсем лекцисем вуласа панă.

— Отчетлă тапхăрта лекторисем чылай ĕçсем туса иртерчĕç,—тесе палăртать докладчик.—Тăвай районĕнчи Сăкăтпуçĕнчи (руководителĕ Медведев юлташ), Октябрьски районĕнчи Хуракассинчи (руководителĕ Астров юлташ) лекторисем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах та лекцилле пропаганда ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе хăшпĕр лайăх тĕслĕхсемпе пĕрлех пысăк çитменлĕхсем те пур-ха.

Правлени ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх вăл лекцисен идейăпа политикăлла тата наукăлла шайне çӳлĕ пусăма лартассишĕн çителĕксĕр кĕрешни пулать. Хăшпĕр чухне лекцисене пăхса тухса çирĕплетмесĕрех вуланă тĕслĕхсем те пулнă. Уйрăм лекцисем çинчен çырнă рецензисем хальхи вăхăтри политикăлла требованисене тивĕçтерме пултараймаççĕ.

Правленин литературăпа искусство тата педагогикăлла наукăсен секцийĕсем уйрăмах япăх ĕçлеççĕ. Секци членĕсен пухăвĕсене вăхăтра иртермеççĕ, вуласа памалли лекцисене сӳтсе явмаççĕ. Техникăпа медицина наукисен секцийĕсем те начар ĕçлеççĕ-ха.

Общество членĕсем республикăри колхозсемпе машина-трактор станцийĕсенче, уйрăмах инçетри колхозсенче, лекцисем сайра хутра кăна иртереççĕ.

Калас пулать, правлени районсенчи уйрăмсен ĕçне йĕркелесе тăма та пултарайман. Сăмахран, обществăн Советски, Куславкка, Шăхасан, Калинино районĕсенчи уйрăмĕсене чылай вăхăт хушшинкам та ертсе пыман. Хĕрлĕ Чутайпа Шăмăршăри уйрăмсем пачах та ĕçлемен.

— Отчетлă тапхăрта, — терĕ докладчик,—правлени президиумĕ районсенчи уйрăмсен лекторĕсене семинарсем йĕркелес тĕлĕшпе сахал пулăшнă. Тăватă çул сурă хушшинче пурĕ те икĕ семинар кăна иртернине урăх нимĕнпе те ăнлантарса пама çук. Уйрăм лекцисене мĕнле иртересси çинчен методикăлла кăтартусем, çавăн пекех экономика ыйтăвĕсем тата тĕнчери лару-тăру çинчен çырса хатĕрленĕ лекцисем районсене çав тери сахал ярса панă.

Обществăн районсенчи уйрăмĕсен уполномоченнăйĕсемпе ответлă секретарьсен инструктивлă канашлăвĕсене те сайра хутра çеç иртернĕ.

Правленипе президиум лайăх ĕçлекен лекторисен, районсенчи уйрăмсен тата унти секцисен опытне сарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ-ха.

Евлампьев юлташ доклачĕ тăрăх 15 çын тухса каларĕ.

— Пирĕн лекторсен коллективĕ пысăк. Вăл чылай ĕçсем тума пултарать,—терĕ **Тарчевский** юлташ (Шупашкар хули).—Анчах чи кирли кунта лекцисен шучĕ мар, вĕсен пахалăхĕ тĕп вырăнта пулмалла. Çакна шута илес пулать: ĕççыннисен культурăллă шайĕ кунсерен ӳссе пырать. Ку вăл, паллах ĕнтĕ, лекцисен пахалăхне яланах ӳстерсе пыма хушать. Çавăнпа та лекторăн ĕçĕ лекцисен тексчĕсене çырса хатĕрленипе кăна пĕтмест-ха. Ун умне ĕççыннисен ыйтăвĕсене чыслăн тивĕçтерсе пырасси тухса тăрать. Кашни лекцин идейăлла-политикăлла шайĕ çӳлĕ пусăмра пулмалла, кашни лекцирех наукăн хальхи вăхăтри аталанăвне тĕрĕс çутатса памалла.

Лекцисене ăнланмалла, çăмăл чĕлхепе вуласа пани пысăк вырăн йышăнать,—тет малалла Тарчевский.—Лекци вуланă чухне чи малтанах итлекенсем камсем иккенне шута илсе, вĕсене ăнланмалла тата усăмлă чĕлхепе каласа памалла. Лекцисенче тĕрлĕрен карттăсемпе, чертежсемпе, плакатсемпе тата диаграммăсемпе усă курни материала тĕплĕнрех ăнланма май парать.

— Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас ĕçре кино-лекцисемпе пачах усă курмаççĕ. Пропагандăн çак формине ĕççыннисемшĕн ăнланмалла çăмăл форма пулса тăнине манмалла мар,—тет хăйĕн сăмахĕнче **Тихонов** юлташ (Вăрнар районĕ).

Федотов юлташ (Сĕмĕрле) лекторсен чĕлхе культурине ӳстересси çинчен чарăнса тăрать. Вăл лекци иртернĕ чухне, унăн идейăлла шайĕсĕр пуçне, ăна лайăх чĕлхепе каласа пани пысăк вырăн йышăнса тănине палăртать. Федотов юлташ каланă тăрăх, обществăн республикăри уйрăмĕн правленийĕ тематикăлла семинарсем иртермест, кадрсене лекцисем вулама вĕрентсе пымасть.

Истори наукин кандидачĕ **Чавка** (Шупашкар) тата **Рождественский** (Чкаловски) юлташсем те лекцисен пахалăхне лайăхлатасси çинчен каларĕç.

Отчетлă докладра та, тухса калаçакансем те лекцисен тематики ансăррине палăртса хăварчĕç.

— Эпир ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен опытне пропагандăлас тĕлĕшпе çав тери начар ĕçлетпĕр,—терĕ **Миданов** юлташ (Вăрмар).—Пирĕн кунта ялхуçалăхĕ республика халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăннине манмалла мар. И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçĕпе партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх лайăх лекцисем сайра хутра çеç иртереççĕ-ха. Çавăн пекех çамрăксем валли те лекцисем сахал иртереççĕ.

Республикăри Учительсен çурчĕн директорĕ **Кондрахин** юлташ та правление хытă критиклерĕ. Вăл пĕр лекци вырăнне тепĕр лекци вулани çинчен, литературăпа искусство темисем тăрăх, шкул çулне çитмен ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем валли лекцисем иртерменни çинчен каларĕ.

Пирĕн ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл экскурсисене йĕркелесе тăракан бюро çукки пулса тăрать,—терĕ Кондрахин юлташ.—Халĕ политехникăлла вĕрентĕве сарса пынă май экскурсисене кайса çӳресси çине учительсем тимлĕн пăхма пуçларĕç. Анчах ятарласа экскурсисем йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлекен орган çук чухне экскурсисем иртерме çав тери кансĕр.

Тухса калакансем пурте лекцилле пропаганда ĕçне ялсенче начар туса пынине палăртрĕç.

— Обществăн Çĕрпӳри уйрăмĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ пулин те, — тет **Александров** юлташ, — пирĕн халлĕхе республикăри уйрăмĕн правленийĕнчи пек çитменлĕхсем нумай-ха. Колхозниксем валли чăвашла лекцисем сахал иртеретпĕр. Пропагандăлла ĕçĕн пысăк пайĕ колхозсенче мар, район центрĕнче кăна пулса иртет. Пирĕн ялхуçалăх ĕçне вĕренсе çитнĕ специалистсем сахал мар, анчах вĕсем лекцисем иртерме пĕри те хутшăнмаççĕ.

Обществăн республикăри уйрăмĕн ялхуçалăх секцийĕн руководителĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ **Петропавловский** юлташ пĕрлешсе пысăкланнă колхозсенче ялхуçалăх пропагандине анлăн сарса ямалли çинчен чарăнса тăчĕ. Çавăн пекех вăл лекцисене йĕркеллĕ иртересси çинчен, лекторсен вăхăтне усăсăр сухатас мар тесе, лекцисем пулмалли аудиторисене малтанах хатĕрлесе хумалли çинчен каларĕ.

Комаров юлташ (Сĕнтĕр) общество правленине лекцисен тексчĕсене вăхăтра пăхса тухманшăн критиклерĕ.

— Лекцисен тексчĕсене эпир март уйăхĕнчех ярса патăмăр, анчах ответне халĕ те кĕтсе илейместпĕр. Лекцисен тезисĕсене районсене çав тери сахал ярса параççĕ, чăвашла çырнисем вара пачах та çук.

Салюкова юлташ (Улатăр) правлени членĕсен ялсене ытларах тухса çӳреме кирлине асăрхаттарчĕ. Общество ĕçĕ ăнăçлă пырасси унăн членĕсем тăрăшса ĕçленинчен килет. Çавăнпа та обществăн республикăри уйрăмĕн правленийĕ районсенчи уйрăмсен ĕçне тĕплĕн тишкерсе тăма, ĕçре конкретлă пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Конференцире КПСС обкомĕн секретарĕ **Ислюков** юлташ тухса каларĕ.

Конференци ĕçне Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн физикăпа математика пайĕн заведующийĕ **Аристов** юлташ хутшăнчĕ.

Отчетлă доклад тăрăх решени йышăнса, конференци обществăн Чăваш уйрăмĕн правленийĕн çĕнĕ составне суйласа хăварчĕ.

Конференци хыççăн пулса иртнĕ правлени ларăвĕнче правлени председателĕ пулма Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместительне **М. А. Андреев** юлташа, председателĕн заместителĕсем пулма **А. В. Платнев, Л. Х. Михайлов, Н. М. Семенов** юлташсене суйланă.

Халăха медицина пулăшăвĕ парассине тăтăшах лайăхлатса пырар

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн çĕршыври ĕççыннисен ырлăхĕшĕн, совет çыннисен сывлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшаççĕ.

Пирĕн çĕршывра пĕтĕм ĕççыннисене медицинăпа санитари пулăшăвĕ парасси укçасăр тата пурне те тивĕç принципа йĕркеллĕ пулса пырать. СССР Конституцийĕ ССР Союзĕн кашни гражданинне чирлесен тата инвалид пулсан, çавăн пекех ватăлсан укçасăр квалификациллĕ пулăшу илме, материальнăй пулăшу илсе тăма право парать.

Халăха медицинăпа санитари пулăшăвĕ парса тăни, çавăн пекех совет çыннисен пурнăçпа культура условийĕсем тĕпренех лайăхланни сиккеен чирсене пĕтĕмпех пĕтерме, ытти чирсене нумай чакарма тата вăхăтсăр вилессине сахаллатма май пачĕç.

Сыватакан тата чир-чĕртен асăрханас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем тĕрлĕ инструментсемпе тата оборудованипе çулсерен пуянланса пыраççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче рентгенсен шучĕ виçĕ хут ӳсрĕ, хуласенчи тата районсенчи кашни больницăрах клиника лабораторийĕсем тунă, хуласенчи 3 больницăра—флюорографически установкăсем, пилĕк больницăра — электрокардиографически кабинетсем пур. Халăха специальнăй пулăшу парасси чылай лайăхланнă. Чирлĕ çынсене диспансерсенче сыватас меслетпе анлăрах усă курма тытăннă. Чылай сывлăх учрежденийĕсенче И. П. Павлов вĕрентĕвĕ çинче никĕсленсе тăракан сывату режимĕ пурнăçа кĕрсе пырать.

Сывлăха сыхлас ĕç лайăхланнине пула, çынсем чирлесси, чирсенчен вилесси чакрĕ, халăх шучĕ ытларах хутшăнса пыракан пулчĕ.

Çаксем пурте вĕсем Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла наци политики пурнăçа кĕрсе пынине яр-уççăн кăтартса параççĕ.

Сывлăха сыхлас ĕç пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра тата та вăйлăнрах аталанать. ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе партин XIX-мĕш съезчĕ панă директивăсенче больницăсен, диспансерсен, ача çуратмалли çуртсен, санаторисен, канмалли çуртсен, ача яслисен, ача-пăча сачĕсен шутне малалла ӳстерсе пыма пăхнă. Пилĕкçуллăхра больницăсенче койкăсен шучĕ 20 процентран кая мар, санаторисенче—15 процента яхăн, канмалли çуртсенче—30 процент, ача яслисенче—20 процент, ача-пăча сачĕсенче—40 процент ӳсмелле. Больницăсене, диспансерсене, санаторисене çĕнĕрен те çĕнĕ медицина оборудованийĕпе малалла пуянлатса пымалла, вĕсен ĕçĕнчи культурăна ӳстермелле.

Съезд директивисенче çапла каланă: «Медицина наукин работникĕсен вăйĕ халăхне сывлăха сыхлас ĕçĕн чи кирлĕ задачисене пурнăçланă çĕре ямалла, уйрăмах чирсенчен сыхланас ыйтусем тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемелле, медицина наукин çитĕнĕвĕсемпе халăх сывлăхне сыхлас ĕçре хăвăртрах усă курмалла тăвас пулать».

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра эмелсем, медицина оборудованийĕ тата инструментсем туса кăларассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, 5,5 хутран кая мар ӳстерме палăртнă. Чиртен хăвăрт сыватакан, чиртен сыхланса пурăнма пулăшакан çĕнĕ эмелсем туса кăларасси, çавăн пекех ку чухнехи диагностикăлла тата профилактикăлла медицина оборудованийĕ ытларах туса кăларасси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенчен пирĕн республикăри медицина работникĕсем умне ответлă, çĕнĕ задачăсем тухса тăраççĕ, çав задачăсене пурнăçлама мĕнпур медицина работникĕсене, партипе совет тата профсоюз организацийĕсен работникĕсене мобилизацилемелле.

Республикăри медицина работникĕсен активĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕ Чăваш республикинчи медицина работникĕсем умĕнне тăракан задачăсене, вĕсене ăнăçлăн пурнăçламалли практикăлла мероприятисене сӳтсе яврĕ. Актив пухăвĕнче парти райкомĕсен секретарĕсем те пулчĕç.

Пухура Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе Чăваш АССР-ĕнчи сывлăх органĕсем умне тухса тăракан задачăсем çинчен КПСС обкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ туса панă доклада, «Халăх сывлăхне сыхлас ĕç мĕнле пулса пыни тата 1953 çулхи задачăсем» çинчен республикăри Сывлăх министрĕ В. Г. Ефимова юлташ, «Трахома чирне пĕтерес майпа халăха диспансеризациленин итогĕсем» çинчен Сывлăх министерствин главнăй окулисчĕ А. З. Шульпенкова юлташ, «Республикăра санитарипе эпидемиологи ĕçĕ мĕнле пулса пыни тата çывăхри задачăсем» çинчен республикăн главнăй санитари врачĕ А. С. Тылюдина юлташ туса панă содокладсене сӳтсе яврĕç.

Доклада тата содокладсене сӳтсе явни çакна кăтартса пачĕ: республикăри сывлăха сыхлас ĕçри работниксем, мĕнпур совет çыннисем пекех, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене хăйсен ĕçĕн программи тесе йышăнса илчĕç, вĕсем Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ чĕнсе калани çине—халăх сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатма тата аталантарма, сывлăхпа санитари учрежденийĕсен ĕçĕнче культурăна ӳстерсе пыма, медицина наукин çитĕнĕвĕсене практикăна кĕртсе пыма чĕнсе калани çине практикăлла ĕçсемпе ответлеççĕ.

Докладчик, содокладчиксем тата пренире тухса калакансем (пренире пурĕ пĕтĕмпе 27 çын тухса каланă) çитĕнӳсемпе практикăлла ĕçсем çинче чарăнса тăнипе пĕрлех, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе республикăри медицина органĕсенче тата сывлăхпа профилактика учрежденийĕсенче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Чирлĕ çынсене сыватас тĕлĕшпе активлă формăсене пурнăçа çителĕксĕр кĕртсе пыраççĕ, çавна пула сывлăха сыхлас ĕçĕн тĕп задачи—сиккеен чирсене пĕтерессине çителĕксĕр пурнăçа кĕрет. Сывлăхпа профилактика учрежденийĕсенче нумайăшĕнче ĕç культури кирлĕ вырăнта мар. Совет медицини наукин çитĕнĕвĕсем тата сыватас ĕçĕн малта тăракан меслечĕсем пурнăçа çителĕксĕр кĕрсе пыраççĕ. Чирсене хăвăрт палăртас, вĕсене эмеллес тĕлĕшпе профилактика ĕçне çителĕксĕр йĕркеленĕ. Сывлăха сыхлас ĕçри нумай работниксем профилактика енĕпе ытларах ĕçлеме кирлине манса каяççĕ, çав питех те кирлĕ ĕçе пурнăçлама тăрăшмаççĕ.

Промышленность предприятийĕсенче, халăх пурăнакан вырăнсенче, апат-çимĕç тыткалакан çĕрте тата ытти учрежденисенче санитари ĕçĕ кирлĕ пек пулса пымасть.

Житомир облаçĕнчи Чуднов районĕнчи врачсен опычĕпе колхозниксен сывлăхне упрас ĕçе диспансерсем урлă туса ирттерекен, малта тăракан меслет Совет Союзĕнче анлă саралнă. Анчах та çав меслетпе пирĕн республикăри медицина работникĕсем кирлĕ пек усă курма халĕ те тытăнман. Медицина работникĕсем халăха санитари ыйтăвĕсене сахал ăнлантарса параççĕ. Медицина енĕпе документаци япăх пулса пырать. Медицина учрежденийĕсем эмеллес тата диагноз парас ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтермен. Чирлĕ çынсене эмеллес ĕçре халĕ те формализм пур, уйрăм работниксем чирлĕ çынсем çине тимлĕ пăхмаççĕ. Республикăра трахомăна пĕтересси çителĕксĕр пулса пырать. Аптекăсен главнăй управленийĕн Чăваш уйрăмĕ, унăн управляющийĕ Сорокина юлташ больницăсене кирлĕ япаласем парса тăрас, аптекăсене ертсе пырас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Медснаб ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур.

Чăваш республикинчи медицина работникĕсен активĕн пухăвĕнчен

Медицина работникĕсен канашлăвĕнче пулнă юлташсем. Сулахайран сылтăмалла: К. В. Скворцова акушерка, Е. И. Иванова акушерка (Канаш районĕнчен), И. Ф. Голов—Çĕрпӳри диспансерăн главнăй врачĕ, А. А. Тушина—врач, Пăрачкав районĕнчи сывлăх пайĕн заведующийĕ, М. В. Покровский—Улатăр больницин хирурги отделенийĕн заведующийĕ тата М. П. Петрова—фельдшерица (Вăрнар районĕнчен).

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çак пĕтĕм çитменлĕхсем Сывлăх министерстви сывлăх учрежденийĕсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пынинчен, вĕсен ĕçне тĕплĕн тĕпчесе пĕлменнинчен тата çав учрежденисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ мерăсем йышăнманнинчен килеççĕ. Министерствăн главнăй специалисчĕсем районсемпе хуласенче сайра хутра кăна пулаççĕ, вĕсем сыватас ĕçе лайăхлатма медицина работникĕсене çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Пур ĕçĕн ăнăçлăхне те çынсем, кадрсем татса параççĕ. Çакă вăл сывлăха сыхлас ĕçре те çавăн пекех. Анчах та пухура Йĕпреçри санитарипе эпидеми станцин главнăй врачĕ Смирнова, Улатăр хулинчи больницăн главнăй врачĕ Латышев, КПСС Первомайски райкомĕн секретарĕ Владимиров, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи сывлăх пайĕн заведующийĕ Терентьева, Октябрьски районĕнчи сывлăх пайĕн заведующийĕ Рябинина, партин Шăмăршă райкомĕн секретарĕ Атлашева юлташсем тата ыттисем тухса каланисенчен çакă куранчĕ: Сывлăх министерстви медицина учрежденийĕсене квалификациллĕ кадрсемпе çирĕплетме кирлĕ мерăсем çителĕксĕр йышăнать, кадрсем час-часах улшăнса тăнипе килĕшсе пурăнать. Октябрьски районĕнче çак таранччене врач-терапевт çук, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 14 врач çитмест, Первомайски районĕнче окулист, терапевт çук, Шăмăршă районĕнче 8 врач çитмест т. ыт. те. Пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри сывлăх учрежденийĕсенче врач кадрĕсем 61,5 процент анчах шутланаççĕ. Апла пулин те иртнĕ çулта 66 врача республикăран тухса кайма ирĕк панă. Сывлăх министерствипе унăн вырăнти органĕсем, çавăн пекех уйрăм райисполкомсем çамрăк врачсене ĕçре пулăшмаççĕ, вĕсене хваттерсем пама, воспитани пама кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ çамрăк специалистсем хăйсен ĕçĕнчен сивенеççĕ, республикăран тухса кайма сăлтавсем шыраççĕ. Пĕр çĕрте ĕçе япăхтарса янă работниксене министерство урăх çĕре — ответлă вырăна куçарать, ята янă медицина работникĕсене те министерство хӳтĕлет. Акă, Йĕпреç больницин главнăй врачне Никитина ĕçрен кăларса ертсе пырас ĕçе лартмалла мар тунă пулнă. Çавна пăхмасăрах, республикăри министерство ăна Муркаш больницин главнăй врачĕ пулма уйăрса лартнă. Никитин вара кунта та ĕçе япăхтарса янă, ĕçкĕ-çикĕпе ашкăнма чарăнман. Çакăн хыççăн ăна каллех ĕçрен кăлармалла тивнĕ.

— Пирĕн района,—терĕ партин Первомайски райкомĕн секретарĕ Владимиров юлташ,—Алексеев врача ярса пачĕç, вăл япăх ĕçленипе ятсăра тухнă пулнă. Вăл халĕ те тӳрленмен, ĕçкĕ-çикĕпе аташать тата хăй ĕçĕшĕн чирлĕ çынсенчен хăратса япаласем илет.

Уйрăм врачсем хăйсене йĕркеллĕ тыткаламаннипе ята пăсаççĕ, обывательсем пулса каяççĕ, ĕç дисциплинине пăхăнмаççĕ, хăшпĕр чухне государствăна улталас çул çине тăраççĕ, тивĕççĕр ĕçсем тума тытăнаççĕ. Анчах та çаксене хирĕç медицина общественноçĕ вирлĕн кĕрешмест-ха.

Министерствăн уйрăм работникĕсем тивĕççĕр ĕçсем тăвакан вырăнти работниксемпе пĕрлешсе каяççĕ. Иртнĕ çулта республикăри хĕрлĕхен лабораторийĕнчи çынсем государство укçи-тенкине 65 пин тенке яхăн вăрланине тупса палăртнă. Следстви вăхăтĕнче çакă палăрнă: çакă тивĕççĕр усал ĕçе тунă çĕре министерствăн аслă госсанинспекторĕ пулнă Шарун, министерствăн главнăй бухгалтерĕ пулнă Светлицкая хутшăннă, çав киревсĕр ĕçшĕн министр заместителĕ пулнă Смирнова айăплă пулнă. Ревизи тунă хыççăн, Каршлăхри санаторире, Чуварлейри санаторире, Октябрьскинчи, Пăрачкаври, Улатăрти больницăсенче т. ыт. çĕрте те пысăк растратăсем тунине, пурлăха çаратса пĕтернине тупса палăртнă.

Сывлăх министерстви тата медицина работникĕсен облаçри профсоюз комитечĕ (председателĕ Васякова юлташ) медицина работникĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, нумай медицина учрежденийĕсенче работниксене идейăпа политика енĕпе воспитани пама куллен тăрăшмаççĕ.

— Пирĕн хулара,—терĕ партин Канаш хула комитечĕн секретарĕ Ласточкин юлташ,—парти вĕрентĕвне медицина работникĕсене пурне те явăçтарнă. Вĕсенчен нумайăшĕ марксизм-ленинизм теорине, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене тăрăшса вĕренеççĕ. Анчах та медицина работникĕсем хушшинче идеологи ĕçне йĕркелесе ярас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха.

Медицина учрежденийĕсенче критикăпа самокритика вăйсăр. Хăшпĕр работниксем врачсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклеме юрамасть, теççĕ. Çакăн пек шухăш актив пухăвĕнче те палăрчĕ. Сăмахран, Сывлăх министерствин главнăй терапевчĕ Осипов юлташ хăй тухса каланă сăмахра хăйне критикленине питĕ кăмăлсăр пулса йышăннине палăртрĕ. Куславкка районĕнчи Аслă Сала больницин главнăй врачĕ Михалева юлташ, республикăри главнăй терапевта Осипов юлташа кирлипе критикленине тĕрĕс мар ăнланса, пухура фактсене юриех йăнăш кăтартса пачĕ. Пухура министерствăн ответлă работникĕсем вырăнсенче сахал пулни, ĕçе тĕплĕн тĕпчесе пĕлменни, сывлăх учрежденийĕсемпе районсенчи сывлăх пайĕсен заведующийĕсене пулăшу паманни çинчен каларĕç. Министерствăн ответлă работникĕсем 1952 çулта районсене 50 хутчен çеç кайса килнĕ. Ефимова юлташ пысăк ĕçри работниксен ответлăхне ӳстерме тăрăшмасть. Вĕсем хăйсен специальноçĕ енĕпе сыватас тата профилактика ĕçĕн организаторĕсем пулса тăман-ха.

Главнăй акушер-гинеколог Ермошкина юлташ ача çуратма пулăшакан учрежденисен ĕçне тĕплĕн пĕлмест, республикăра çав ĕçе лайăхлатма мерăсем йышăнмасть.

Организаципе методика пулăшăвĕ пама тата районти больницăсенче сывату ĕçне йĕркелеме главнăй хирург Кузнецов юлташ 1952 çулта (министерствăн ĕçне тĕрĕсленĕ тĕле) вырăна пĕр хутчен, главнăй терапевт Осипов юлташ икĕ хутчен кăна кайса килнĕ.

Чăннипех те йĕркесĕр япала пулса тăнă: министерствăн нумай работникĕсем, çав шутрах унăн главнăй специалисчĕсем те, пĕр вăхăтрах темиçе ĕç туса тăнине пула, министерство енĕпе тӳрремĕнех тумалли ĕçсене пурнăçлама вăхăт тупаймаççĕ.

Çак чăнлăха Михалева юлташ сирсе пăрахма хăтланчĕ, фактсене юриех йăнăш илсе кăтартрĕ, çапла вара, министерствăн главнăй специалисчĕсене, çав шутрах Осипова та, критикленине пĕтĕмпех пĕтерсе хума шут тытрĕ.

Республикăн главнăй терапевчĕ Осипов юлташ Михалева юлташран чылай кайран тухса каларĕ. Анчах вăл унăн йăнăшне тӳрлетмерĕ, Михалева юлташăн шухăшĕпе килĕшрĕ пулмалла. Осипов юлташ акă мĕн каларĕ: главнăй специалистсене тĕрĕс мар ĕç условийĕсене лартнă, вĕсем «вăхăта 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен ларса ирттереççĕ», вăл, Осипов юлташ, хăйне ларма «минтер те туяннă» иккен.

Вăхăта «ларса ирттерес мар», творчествăлла ĕçлес тесе мĕн туни çинчен Осипов юлташ пĕр сăмах та каламарĕ. Çакна вăл аялтан килекен критика пек кăтартса пама тăрăшрĕ.

Партин Етĕрне райкомĕн секретарĕ Перлович юлташ, трахомăна пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн директорĕ Васильева юлташ, Вăрнар больницин главнăй врачĕ Головлев юлташ тата ытти юлташсем те медснабăн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Медснаб работникĕсем хăйсене критиклесе калаçнисене ним чĕнмесĕр ирттерсе яма шут тытрĕç.

Министерствăра, унăн вырăнти органĕсенче тата медицина учрежденийĕсенче критикăпа самокритика сукки, унран хăраса тăни ĕçре ответсăрлăх патне, çӳлте тăракан органсен решенийĕсемпе министр приказĕсене пурнăçламасăр хăварасси патне, ĕçри пысăк йăнăшсем патне илсе пыраççĕ.

Муркаш тата Сĕнтĕр больницисенче санитарие пăхăнмаççĕ: палатăсем тĕтĕмпе хуралса ларнă, урайсем таса мар, палатăсенче сывлăш пăчă. Сĕнтĕр больницинче кухньăра пăру усраççĕ. Чурачăк районĕнчи больницăра кашăк-тирĕк çитмест, пуррине те кунне пĕр хут çеç çуса тасатаççĕ. Тирĕк-чашăка кунĕпех сывă мар çынсем умĕнчи тумбочкăсем çинче тытаççĕ. Уйрăм больницăсенче санпропускниксем çук, территорие йĕркене кĕртмен, унта йывăççем лартман. Хăшпĕр больницăсене тулашран пăхма та кичем. Çавăн пек çитменлĕхсем ку таранччен пурри вăл критикăна хисеплеменнинчен, хушнă ĕçшĕн руководительсем ответлăха туйса тăманнинчен килеççĕ ĕнтĕ.

Республика больници, туберкулез диспансерĕ, республикăри санитари тата эпидеми чирĕсене хирĕç кĕрешекен станци, венерологи тата онкологи диспансерĕсем чирсенчен сыватас тĕлĕшпе халĕ те ыттисемшĕн паха тĕслĕхсем кăтартмаççĕ, вĕсем наукăпа методика ĕçĕсене начар туса пыраççĕ, совет медицинин малта тăракан меслечĕсене пурнăçламаççĕ, халăха медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатас тĕлĕшпе министерствăна япăх пулăшаççĕ. Çак çитменлĕхсем те критика çуккинчен килеççĕ.

Сывлăх министерстви кăçал трахомăна пĕтĕмпех пĕтерес задачăна татса парас енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Çакăншăн республикăн главнăй окулисчĕ Шульпенкова юлташ та, трахомăпа кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекен институт та айăплă. Институт работникĕсем районсенче сайра-хутра çеç пулаççĕ.

Халăха медицина пулăшăвĕ парса тăрас ĕçе татăклăн лайăхлатас задачăсем мĕнпур медицина работникĕсен ответлăхне ӳстерме хушаççĕ. Ĕçе çапла йĕркелес пулать: совет çыннин пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн кĕрешесси кашни врачăн, фельдшерăн, медицина сестрин аслă закон пулса тăтăр. Стационарта эмеллеме кирлĕ кашни чирлĕ çынна больницăна вăхăтра хурас пулать, ăна пĕлсе эмеллес пулать. Чуднов районĕнчи врачсен пуçарăвне пур районсенче те сарса пымалла.

Пирĕн больницăсем пур енĕпе те ĕçре пысăк культура кăтартма тивĕç. Больницăн пĕтĕм ĕçне коммунизм тăвакан совет çыннишĕн тăрăшма пăхăнтармалла.

Ĕççыннисем хушшинче санитари пропагандине анлăн туса пымалла, вĕсен санитари культурине ӳстермелле. Санитарипе гигиена хăнăхăвĕсене çитĕннисем хушшинче те, ачасем хушшинче те пурнăçласа пымалла. Республикăри хуласемпе ялсен санитари культурине куллен лайăхлатса пыма тăрăшмалла.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕç—пĕтĕм халăх ĕçĕ. Çавăнпа санитари культурине ӳстерессишĕн республикăри пĕтĕм халăхăн тăрăшмалла.

Медицина работникĕсене партипе совет органĕсем, профсоюз организацийĕсем куллен пулăшмалла, медицина учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма общественноçа анлăн хутшăнтармалла.

НИКИТА ЯКОВЛЕВИЧ БИЧУРИН

(Вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май)

Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене, уйрăмах Китая, Монголие, Тибета тата Вăтам Азипе Çĕпĕре тĕпчесе вĕренекенсем Никита Яковлевич Бичурин ĕçĕсене лайăх пĕлеççĕ. Вăл XIX ĕмĕрĕн малтанхи çур пайĕнчи Китая, унăн культурипе йăлине тата чĕлхипе çырулăхне питĕ тăрăшса тĕпчесе вĕреннĕ.

Бичурин ĕçĕсем пичетленсе тухни Росси культуринчи пысăк событи пулнă, мĕншĕн тесен шăпах та çав вăхăтра акăлчансемпе французсем Азири çĕршывсене хĕçпăшалпа тата тĕрлĕрен ултавпа пырса кĕрсе вĕсене хăйсен колонийĕсем тăвасшăн тăва хунă. Парижпа Лондонри ученăйсемпе писательсем Азири халăхсене, çав шутрах китаецсемпе монголсене те, кĕçĕн раса çыннисем тенĕ, капиталистсен вăрă-хурахла ĕçĕсене тӳрре кăларма тăрăшнă.

Бичуринăн Китай çинчен çырнă кĕнекисем пĕтĕм тĕнчипе паллă вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕсене Европăри нумай чĕлхепе пичетлесе кăларнă. Тĕнче наукишĕн Бичурин калама çук пысăк ĕç тунă. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр ют çĕршыв çынни Бичурин çинчен çапла каланă: «XIX ĕмĕрĕн малтанхи çур пайĕнчи Китая тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе вăл тĕнчери мĕнпур ученăйсем пĕрле тунинчен те чылай ытларах ĕç тунă», тенĕ.

Анчах патша Российинче çирĕпленнĕ йĕркесемпе йăласене пула, Бичурин чапа тухман, унăн пархатарлă та усăллă ĕçне хăшпĕр наука çыннисем кăна пĕлнĕ.

Никита Яковлевич Бичурин 1777 çулхи августăн 29-мĕшĕнче Шупашкар уездĕнчи Шĕнерпусĕнче (халĕ Октябрьски районĕ) чухăн тиек çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ чăваш, амăшĕ вырăс пулнă. Ашшĕ, шалу укçи тăранса пурăнма çитмен пирки, тырпул та акса тунă тата тăлмач ĕçĕпе те кăштах ĕçлекеленĕ.

8 çула çитсен, Никитăна Сĕвери новокрещенски шкула, «нота тăрăх юрлакансен класне» вĕренме панă, темиçе çул вĕренсен ăна Хусанти духовнăй семинарие куçарнă. Унта вăл 1788 çултан пуçласа 1799 çулччен вĕреннĕ. Семинарири йăла тăрăх, хушаматсăр вĕренекенсене пурне те хăйсен тăван ялĕн, прихучĕн е престол праçникĕн ятне кура хушаматсем панă. Çапла вара 12 çулхи Никита, хăйĕн тăван ялĕн вырăсла ячĕ тăрăх, Бичуринский пулса тăнă. Бичуринский хушаматпа вăл 1795 çулта пĕр сăвă айне кăна алă пуснă, каярахпа «ский» сыпăкă кăларса пăрахнă та, «Бичурин» кăна хăварнă.

Бичурин питĕ пултаруллă пулнă, лайăх вĕреннĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн ăна малтан грамматика преподавателĕ туса семинарирех ĕçлеме хăварнă, каярахпа красноречи преподавателĕ туса хунă.

Семинарире Никита Бичурин латынь, грек, француз, нимĕç чĕлхисене лайăх вĕреннĕ, çак чĕлхесемпе вăл вуланă та, çырнă та. Çавăн пекех ӳкерчĕксем тума та вĕреннĕ.

1807 çулта Бичурина, Пекинри духовнăй миссин начальникĕ тата Пекинри Сретенски монастырĕн архимандричĕ туса, Китая янă.

Пекинра Бичурин 14 çул—1822 çулччен пурăннă. Çак вăхăтра вăл калама çук пысăк ĕç тунă. Малтанхи тăватă çул хушшинчех вăл китай чĕлхине питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ, каярахпа монгол чĕлхине те вĕреннĕ.

Пĕр литература журналĕнче çырнă тăрăх, Бичурин хăй те китаец пек сăн-сăпатлă çын пулнă. Вăл китаецла тумланса, Пекинпа ун таврашĕнчи тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем — китаецсем, монголсем, маньчжурсем, тибетецсем хушшипе час-часах тухса çӳренĕ. Çакă ăна халăх калаçакан чĕлхене вĕренес ĕçре питĕ пысăк пулăшу панă. Çав вăхăтрах вăл нумай вуланă, китаецсен литература чĕлхипе паллашнă.

Бичурин Пекинра çырнă ĕçсем, тĕпрен илсен, виçĕ ушкăна пайланса тăраççĕ:

1. Словаре хушса çырни тата Китай чĕлхин грамматики тĕлĕшпе ĕçлени. Вăл 12 пин сăмах кĕртсе китаецла-вырăсла словарь, 4 томлă маньчжурла-китаецла словарь çырнă, вырăсла-китаецла пĕчĕк словарь çырма пуçланă.

2. Китай, Монголи тата Тибет историйĕпе географийĕ çинчен çырнă кĕнекесене вырăсла куçарнă. Вăл 18 томлă «Большая часть географического описания Китайского государства», 10 томлă «История Китая и полная география всех земель, подвластных этой империи», «Сокращенные монгольские Уложения и нескольких китайских сочинений о Тибете» ятлă кĕнекесене тата ыттисене те вырăсла куçарнă.

3. Пекинра пурăннă вăхăтра Бичурин «Описание Пекина с китайского подлинника 1788 года и план города, снятый им в 1817 г.» ятлă кĕнеке çырнă. Пекин планне ӳкерсе илес тесе, Бичурин пĕр çул хушши ĕçленĕ: вăл Пекинри кашни урампа тăкăрлăка утса та, виçсе те тухнă; Пекин йĕри-тавра 31 çухрăм та 322 чалăш пулнине шутласа кăларнă. Кунтах вăл китаецсен, маньчжурсен, монголсен, Туркестанпа Тибетри халăхсен арçынĕсемпе хĕрарăмĕсен 49 тĕрлĕ тумне ӳкерсе илнĕ. Çак альбома халĕ те Ленинградри публичнăй библиотекăра усраççĕ. 1821 çулта миссие Пекинран каялла Российăна чĕнсе килме йышăннă.

Вырăс государствин столицине Бичурин 1822 çулта таврăннă. Российăна вăл Китай çинчен хĕвелтухăçĕнче пурăнакан халăхсен чĕлхипе çырнă кĕнекесем, тĕрлĕрен культура япалисем питĕ нумай илсе таврăннă. Пĕр кĕнекесене кăна вăл 15 тĕве çине тиесе илсе килнĕ. Çак кĕнекесене Бичурин Петербургри публичнăй библиотекăна тата Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаментне панă.

Российăна Бичурин чăн-чăн патриот пек таврăннă. Çавăнпа та вăл чикĕ урлă каçсанах: «Тăван çĕршыв, санран вăрăм вăхăтлăха уйрăлнă хыççăн, эсĕ мăна чи малтан саламлатăн», тесе хумханса каланă.

Бичурин наукăра 30 çул ытла ĕçленĕ. Çак вăхăтра вăл Китай, Монголи тата Тибет çинчен чылай кĕнекесем çырса пичетлесе кăларнă. Пĕр француз, хĕвелтухăçĕнчи чĕлхесен профессорĕ Клапорт каланă тăрăх, «Иакинф пĕччен тунă ĕçе тепĕр наукăллă общество та тума пултарайман».

Бичурин Китай халăхне пĕтĕм чунĕпе юратнă, унăн йăлисене, культурипе искусствине питех те хисепленĕ. Бичурин XIX-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çур пайĕнче прогрессивлă интеллигенцин чи пысăк представителĕсемпе тата декабристсемпе çыхăну тытнă çын пулнă.

Никита Яковлевич Бичурин XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнчи литература общественноçĕпе питĕ çывăх пулнă. Вăл хăй те япăх мар литератор пулнă, нумай журналсемпе альманахсем çине çырса тăнă.

Бичурин вырăссен аслă писателĕпе Александр Сергеевич Пушкинпа çывăх пулнине архиври документсем те аван кăтартса параççĕ. Пушкинпа Бичурин 1827 çулта паллашнă. Çак вăхăталла Пушкин Китайпа, пĕтĕçтерсе каласан — Хĕвелтухăçпе, унти халăхсен культурипе, литературипе тата искусствипе интересленнĕ пулас. Çак ыйтупа кĕнекесем, хаçат-журналсенче статьясем нумай пичетленсе тухнă май, унпа çамрăк Пушкин ытларах та ытларах интересленсе пынă.

Аслă писателĕн килти библиотекинче Бичурин Пушкина парнелесе панă кĕнекесем те тупнă. Сăмахран, 1828 çулта пичетленсе тухнă «Описание Тибета в нынешнем его состоянии» ятлă хăйĕн кĕнекине Бичурин Пушкина çапла çырса панă: «Мăнăн милостивăй государе Александр Сергеевич Пушкина, куçаракантан, чăнласах хисепленине палăртса, Апрелĕн 26-мĕшĕ, 1828 çул. Куçаракан Иакинф Бичурин». Пушкина Бичурин хăйĕн ытти кĕнекисене те парнелесе панă. Тĕслĕхрен, 1829 çулта пичетленсе тухнă «Троесловие» ятлă кĕнекине: «Александр Сергеевич Пушкина — куçаракантан», тесе çырса панă.

Пушкин Бичуринпа туслă пулнине аслă поэт «К истории Пугачевского бунта» валли çырнă пĕр пĕчĕк асăрхаттару та кăтартса парать. Кунта, 8-мĕш пунктра, Пушкин çапла çырса хунă: «Калмăксем килсе тапăнни çинчен чи тĕрĕс те шанчăклă хыпарсемшĕн пирĕн Иакинф аттене тав тăвас пулать. Вăл питĕ нумай пĕлни тата унăн тӳрĕ кăмăлпа тунă ĕçĕсем эпир Хĕвелтухăçĕпе мĕнле çыхăнусем тытнине питĕ лайăх çутатса пачĕç. Тав тусах, эпир кунта унăн халĕ пичетленсе тухайман кĕнекинчен калмăксем çинчен калакан сыпăка кĕртетпĕр».

Кунсăр пусне, Бичурин Петербургри литература салонĕсенче те Пушкинпа темиçе хут та тĕл пулнă, мĕншĕн тесен Бичурин çав салонсене час-часах çӳренĕ.

Документсем кăтартса панă тăрăх, Бичурин В. Г. Белинскипе, В. Ф. Одоевскипе, А. М. Шегренпа, А. А. Краевскипе, И. А. Крыловпа, И. И. Панаевпа, К. П. Брюллов художникпа, М. И. Глинка композиторпа тата вăл вăхăтри ытти литераторсемпе те çыхăну тытнă, вĕсене палланă, вĕсемпе хутшăннă. Çавăн пекех «Московский телеграф» журнал урлă вăл Мускав писателĕсемпе те — М. П. Погодинпа, Н. И. Надеждинпа, К. А. Невольнăйпа, Юрий Венелинпа, Н. С. Щукинпа, С. П. Шевыревпа паллашнă.

Бичурин икĕ çул хушши вырăн çинчен тăраймасăр асапланса выртнă хыççăн, 1853 çулхи майăн 11-мĕшĕнче (кивĕ стильпе) вилнĕ. «Кирек епле пулсан та,—тесе çырнă унăн некрологĕнче, — малашнехи ăру çак манаха чĕререн тав тăвĕ: вăл хăйне валли мар, тăван çĕршыв валли ĕçлесе хăйĕн ĕмĕрне ирттерчĕ».

Бичурин тăван çĕршывăн, вырăс халăхĕн хĕрӳллĕ патриочĕ пулнă, отечественнăй наукăна, вырăс чĕлхине чунтан хисепленĕ, хăйĕн пур кĕнекисене те вырăсла кăна çырнă, вырăс чĕлхине хисеплемен космополитсене тивĕçлĕ отпор панă. «Пĕрремĕш Петртан пуçласа, — тенĕ вăл, — ку таранччен эпир нимĕн шухăшласа тăмасăрах ют çĕршыв писателĕсем умĕнче пуç тайса тăман пулсан, çутĕçĕн нумай отраслĕсенче пирĕн тахçанах хамăрăн никама пăхăнманлăх пулнă пулĕччĕ». Вырăс çыннисене вăл наука кĕнекисене тăван чĕлхепе — вырăс чĕлхипе çырма чĕннĕ.

Бичуринăн ĕçĕсене В. Г. Белинский питĕ пысăка хурса хакланă, вырăс литературин обзорĕсенче Бичурин ĕçĕсене вăл уйрăммăн илсе палăртнă. Çав вăхăтрах В. Г. Белинский Бичурин Китайăн авалхи историйĕпе общество стройне идеализациленине питĕ хытă критикленĕ. Вăл вăхăтри Китай ĕмĕрлĕхе сывăрса кайнă çĕршыв пулнине Бичурин асăрхаман, ăна çав ыйхăран вăратсан çеç малалла аталантарма пултарнине ăнланса илеймен, унăн малашлăхне курман. Çакă ăна йăнăш шухăшсемпе выводсем патне илсе пынă.

Никита Яковлевич Бичурин вилнĕренпе çĕр çул иртрĕ. Унтанпа Китая тата Азири ытти çĕршывсене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе питĕ пысăк çитĕнӳсем тунă.

Совет Со[illegible] Китая тулли правăллă çĕршыв вырăнне хурса йышăнчĕ, Китай халăхĕ чуралăхран ирĕке тухнине чунтан-чĕререн саламларĕ.

П. ГРИГОРЬЕВ,
истори наукисен кандидачĕ.

Тĕнчери лару-тăру

УЛТĂ ÇĔРШЫВ МИНИСТРĔСЕН ПАРИЖРИ КАНАШЛĂВĔ АНĂÇЛА ПУЛМАН

Парижра майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 14-мĕшне çитиччен «Европăри çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвне» кĕрекен ултă çĕршывăн (Франци, Итали, Хĕвеланăç Германи, Бельги, Голланди тата Люксембург) ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу «Европăри политикăлла пĕрлешÿ» текенскерĕн проектне сÿтсе явнă. Канашлура пăхса тухма çав «пĕрлешĕвĕн» статутне, урăхла каласан, «Европа конституцийĕн» проектне тăратнă. Ку проекта çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвĕн «ятарласа пухнă ассамблейĕ» Страсбургра кăçал март уйăхĕнчех туса хатĕрленĕ пулнă.

Канашлу хыççăн пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре: «политикăлла пĕрлешÿ тума кирлине тата хальхи вăхăтра тăвакан ĕçсене пĕр чăрмавсăр малалла туса пыма кирлине министрсем пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăнчĕç», тесе çирĕплетсе каланă. Анчах та фактсем çак пĕлтерĕве ячĕшĕн кăна çавăн пек çырни çинчен калаççĕ, мĕншĕн тесен, канашлу умĕнче «Европа конституцийĕн» конкретлă проекчĕ тăнă пулин те, вăл практикăлла нимĕнле решени те йышăнман. Тата икĕ канашлу ирттерме кăна палăртнă: июнĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕшне çитиччен—Римра правительствăсен канашлăвне ирттермелле; июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Гаагăра ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пулмалла. Ку канашлура Римри канашлăвăн итогĕсем çинчен доклад итлемелле.

Франципе тухса тăракан «Комба» хаçат Парижра ултă министр хушшинче пулса иртнĕ калаçусен итогне туса тивĕçлипех çапла калама пултарнă: тĕрĕссипе илсен, хирĕçÿсем пулнă пирки «Европа конституцийĕ» çинчен тăракан проект пăрахăçа тухнă тесе шутламалла, мĕншĕн тесен вăл «нотăсем, меморандумсем, хирĕçле сĕнÿсем, докладсем хушшинче пурпĕрех путса ларать».

Канашлу итогĕ çакăн пек мĕскĕн пулса тухнине мĕнпе ăнлантарса пама пулать-ха? Çакă вăл пысăк хирĕçÿсенчен, канашлура пулнă çĕршывсен интересĕсем пĕр-пĕрне хирĕçле пулнинчен килет.

«Европа конституцине» йышăнтарасшăн, çакăн тăрăх «наципрен çÿлте тăракан политикăлла власть» туса хурассишĕн пуринчен ытла Хĕвеланăç Германи тăрăшнă. Итали ун майлă тăнă. Хĕвеланăç Германи çакнашкал позици йышăнни вăл Хĕвеланăç Германи Хĕвеланăç Европăра мала тухасшăн пулнине пĕлтерет. Европăри çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвне çак тĕллевпе туса хунă та ĕнтĕ. Çак пĕрлешÿ пуçĕнче Рурти çĕр кăмрăкĕпе хурçă магначĕсем тăраççĕ. «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» е «Европа çарĕ» тенĕскерне те туса хума хатĕрленĕ проект тăрăх, çак çарăн тĕп чăмăрĕ—Бонн реваншисчĕсен çĕнĕрен ураланса çĕкленекен хĕçпăшаллă вăйĕсем пулмалла.

«Европăри политикăлла пĕрлешÿ», ăна пуçарса яракансен шухăшĕ тăрăх, «Европа пĕрлĕхĕ» тенĕскерне вĕçлесе çитермелле. Çак «пĕрлĕхре» Хĕвеланăç Германи экономикăпа çар тĕлĕшĕнчен çеç мар, тата политика тĕлĕшĕнчен те тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Çавăнпа та Парижра тухса тăракан «Трибюн де Насьон» хаçат: «Европа конституцийĕ» тенĕскерĕ Хĕвеланăç Германин империализмла интересĕсене пăхăнса тăрать, нимĕç империализмĕн представителĕсем «хăйсен уйрăм позицийĕсене тивĕçтерекен çак идейăсене пурнăçлас ĕçе хатĕрлеççĕ», тесе тĕрĕс çырать. Анчах çак позици вăл Франци, Бельги, Голланди, Люксембург интересĕсене хирĕç пырать. Çакă вăл канашлура пулнă дискуссире палăрнă. Ултă министр Парижа пырса çитнĕ хыççăнах вĕсем хушшинче çак канашлăвăн тĕллевĕ пирки те килĕшÿ çукки палăрнă. «Германипе Италишĕн пулсан,—тесе çырнă «Франс суар» хаçат,—туса хатĕрленĕ договор текстне пăхса тухса йышăнасси çинчен кăна сăмах пынă; Франципе Бельгишĕн пулсан вара сăмах процедура тĕлĕшпе калаçса татăласси çинчен çеç пырать. Ку процедура договор çинчен çак текст тăрăх калаçусем ирттерме май памалла».

«Европа конституцийĕ» тенĕскерне хăвăртрах йышăнтармалла тума тăрăшса, Хĕвеланăç Германи, хаçатсем çырнă тăрăх, «наципрен çÿлте тăракан политикăлла влаçа» пысăк правăсемпе полномочисем пама ыйтнă. Çак полномочисем оборона тĕлĕшпе те, çĕр кăмрăкĕпе тимĕр-тăмăр промышленноçĕ тĕлĕшпе те пулмалла, тенĕ. «Франс суар» хаçат çырнă тăрăх, çав полномочисем вĕсем, Хĕвеланăç Германи шучĕпе, пĕтĕм экономика тĕлĕшпе пулмалла. «Трибюн де Насьон» хаçат çакăн пек вывод тăвать: «Европа конституцийĕ» çинчен калакан проект, ăна хальхи вăхăтра çырса хатĕрленĕ пек илес пулсан, вăл Германи экспансионизмĕн сĕмсĕр маневрĕ пулса тăрать. Çавăнпа та Франци правительстви ăна сÿтсе явма килĕшнĕ пирки тĕлĕнмелле кăна».

Бонн канцлерĕ Аденауэр темĕн пек тăрăшнă пулсан та, унăн ĕç тухман. Франци делегацийĕпе Бенилюкс çĕршывĕсен делегацийĕсем канашлура пăхса тухма тăратнă проекта хирĕç хăйсем çинчен чылай сĕнÿсем тăратнă. «Монд» хаçат çырнă тăрăх, çак сĕнÿсем вĕсем «пĕрлешÿ наципрен çÿлте тăмалли» çинчен каланă шухăша чылай пĕчĕклетме пултараççĕ. Шăпах та çавăнпа ĕнтĕ канашлу ăнăçсăр вĕсленнĕ.

Анчах каярахпа пулса иртнĕ ĕçсем Аденауэр Европăна Хĕвеланăç Германи тавра «пĕтĕçтерес» шухăша пăрахманнине кăтартса пачĕç. Бонри пуç пулса тăракан ушкăнсем хытă хĕснипе майăн 15-мĕшĕнче бундестаг Бонра хатĕрленĕ сепаратнăй договора, çавăн пекех тата Европа çарĕ çинчен Парижра çырса хатĕрленĕ договора йышăнчĕ. Аденауэр Лондона кайса килесси те çав тĕллевпех пулнă пулмалла. Вăл Бона тата унăн океан леш енчи хуçисене пăхăнса тăракан «Европа пĕрлĕхĕ» туса хурас тĕлĕшпе Англи правительствине хăй енне çавăрма тăрăшнă. Анчах çак идейăна Хĕвеланăç Европăри пĕр çĕршыври халăх массисем те, вăл шутра Хĕвеланăç Германири халăх массисем те йышăнмаççĕ.

Капитализм лагерĕнчи çĕршывсем хушшинчи тарăн хирĕçÿсем, уйрăмах Франципе Хĕвеланăç Германи хушшинчи хирĕçÿсем, çавăн пекех тата халăхсем хăйсен наци никĕсĕ пăхăнманлăхне сыхласа хăварма тăрăшни—çаксем пурте вĕсем Парижра ултă çĕршыв министрĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явнă «Европа конституцийĕ» текен проект пек тĕрлĕ йышши «Европа пĕрлĕхĕн» проекчĕсене пурнăçа кĕртес çул çинче сирсе ямалла мар пысăк чăрмав пулса тăраççĕ.

ФРАНЦИРЕ ФИНАНС ТĔЛĔШПЕ ТУХСА ТĂНĂ ПЫСĂК ЙЫВĂРЛĂХСЕМ

Майăн 18-мĕшĕнче Францин Наци пухăвĕ Рене Мейер правительстви хатĕрлесе панă «финанс ĕçне лайăхлатмалли» проекта сÿтсе явма тытăннă. Франципе финанс ĕçĕсем пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкнине пула финанс ĕçне лайăхлатма васкавлă мерăсем йышăнмалла пулнă. Франци укçи—франк пĕрмаях йÿнелсе пырать. 1952 çулта унăн тавар илме пултаракан хакĕ 1947 çулхипе танлаштарсан, 42 процент кăна юлнă, ваккăн сутакан таварсен хакĕ вара 1947 çултан пуçласа 1952 çула çитиччен 2,4 хут ÿснĕ. Халĕ алăра калама çук нумай—2.000 миллиард франк хут укçа çÿрет. Бюджет дефицичĕ çав тери ÿссе кайса 804 миллиард франка çитнĕ, Мейер хăй каланă тăрăх, «расходсем çултан-çул вĕçĕмсĕр ÿссе пынине» чарса лартмасан, 1954 çулта расходсем тупăшсенчен пĕр пин миллиард франка яхăн ытларах пулаççĕ. Анчах «расходсем вĕçĕмсĕр ÿссе пыни» çав тери нумай хĕçпăшал туса кăларнинчен тата Вьетнам халăхне хирĕç вăрçа калама çук нумай укçа-тенкĕ пĕтернинчен килни çинчен Мейер шарламан.

«Финанс ĕçне лайăхлатмалли» проект туса, правительство ăна Наци пухăвĕнче çав тери васкавлă йышăнтарасшăн пулнă, мĕншĕн тесен вăхăт кĕтмест тата лару-тăру чăнах та йывăр. Анчах Франци халăхĕ ун пек проектсене пĕр хут çеç мар курнă, сăмахран, «Пиней экспериментне» тата ун умĕнхи пуçлăхсен ĕçĕсене вăл лайăх астăвать. Çав мерăсем пурте налогсен йывăрлăхне кăна ÿстернĕ, халăх пурнăçне малалла начарлатнă, анчах финанс ĕçне лайăхлатман. Çав мерăсемпе проектсен тĕп уйрăмлăхĕ çакăнта пулать: вĕсем финанс йывăрлăхĕсем ÿссе пынин чăн-чăн сăлтавĕсене — Францин çар расхочĕсем пĕрмаях ÿссе пынине, гражданла экономикăн мирлĕ отраслĕсем чакса пынине, океан леш енчи монополисен кăмăлне юрас тесе, çĕршывăн тулашри суту-илÿ çыхăнăвĕсенче çĕршывăн интересĕсене хисеплеменнине шута илмеççĕ. Франци парламенчĕн депутачĕ Жорж Коньо хăйĕн сăмахĕнче Франципе 1932—1936 çулсенче бюджет политики çак принциппа пулса пынине аса илтернĕ: «Пĕрремĕшĕнчен, финанс ĕçне лайăхлатмашкăн правительство çĕршыва йывăрлăхсем тÿсме хистенĕ; иккĕмĕшĕнчен, çав йывăрлăхсене тÿсме тивсен те, финанс ĕçĕ лайăхланман; виççĕмĕшĕнчен, çав финанс ĕçĕсене лайăхлатма тесех, правительство çĕнĕ йывăрлăхсем тÿсме хистенĕ... Хальхи правительство ĕлĕкхисенчен çакăнпа кăна уйрăм: вăл ку тĕлĕшпе татах та пысăкрах йывăрлăхсем тÿсме хистет».

«Журнал Офисьель» правительство декречĕсене пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен уççăнах çакă курăнать: правительство халăха вĕрентме, сывлăха сыхлама, общественнăлла ĕçсене тума, промышленносăн гражданла отраслĕсене хывма, социальнăй обеспечени валли тата ытти çĕре каякан укçа-тенке чакарма палăртнă, чугун çул сунчи тарифсене 25 процент ÿстерме йышăннă.

Çавăн пек мерăсене, ĕçсыннисен халăхĕ те начар пурнăçне татах та начарлатакан мерăсене, суйлавçăсем хирĕç пынине шута илсе, правительство «декретсем кăларса укçа-тенкĕ перекетлемешкĕн» хăйне ятарласа полномочисем пама ыйтнă. Наци пухăвĕн финанс комиссийĕ правительствăна ун пек полномочисем пама килĕшмен. Анчах Мейер, «Франс Пресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Наци пухăвĕнчен «проекта малтанхи пекех йышăнма ыйтнă, унсăрăн правительство тытăнса тăма пултараймасть тесе, правительствăна шанас пирки ыйту тăратнă». «Фигаро» ятлă сылтăм хаçат та правительство «кирлĕ полномочисем» илес пирки иккĕленсе çырнă, чрезвычайнăй полномочисем ыйтнă пиркиех парламент Пиней правительствине шанманни çинчен резолюци йышăннине аса илтернĕ. Çапла пулсан та, Мейер правительстви хăйне çавăн пек полномочисем пама ыйтни çакна кăтартса парать: сылтăм депутатсем те, суйлавçăсем тарăхнине ирĕкĕсĕрех шута илсе, правительство финанс тĕлĕшпе ирттерекен мероприятисене ырласа Мейер правительстви шанман, çавăнпа та вăл декретсем кăларса «перекет тума» шутланă, финанс йывăрлăхĕсене ĕçсыннисем çине йăвантарма тăрăшнă.

Коммунистсем кăна мар, сылтăм депутатсен чылай пысăк пайĕ те Мейер правительстви финанс тĕлĕшпе хатĕрленĕ закон проектне йышăнма килĕшмен. Вĕсем правительствăна шанмалла мар тесе сасăланă, çавна пула правительство отставкăна тухнă. Çакă ĕнтĕ ĕçсыннисен пурнăçне начарлатаса финанс йывăрлăхĕсенчен тухма хăтланнине хирĕç халăх массисем хытă тăнине, Франципе халĕ влаçра тăракансен политики—çĕршыва милитаризацилекен политика — панкрута тухнине кăтартса парать. Мирлĕ экономикăна аталантарассишĕн тăрăшни, Францири пĕтĕм халăх интересĕсем майлă нацилле тата демократилле политика тытса пыни кăна финанс ĕçне лайăхлатма пултарать.

ВЕНГРИРИ ĔÇСЫННИСЕН ПĔРЛĔХНЕ КĂТАРТАКАН ХĂВАТЛĂ ДЕМОНСТРАЦИ

Майăн 17-мĕшĕнче Венгри Халăх Республикин Государство пухăвне суйлани çĕршыври ĕçсыннисем хăйсен правительстви тавра, Венгрири ĕçсыннисен партийĕ тавра çав тери çирĕп пĕтĕçсе тăнине, вĕсен политикине шаннине, ăна кăмăлланине кăтартса пачĕ. Çĕршывра çирĕпленсе çитнĕ çĕнĕ общественнăй строя ĕçсыннисем чунтан ырлани уççăн курăнчĕ. Çав строй Венгри халăхне помещиксемпе капиталистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларчĕ, экономикăпа культурăна аталантарма сутă малашлăх уçса пачĕ.

Суйлавçăсем пысăк активлăхпа сасăланă. Сасăлама пултаракан 6.501.869 гражданран 6.370.519 çын сасăланă, урăхла каласан, мĕнпур суйлавçăсен 98 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Халăхăн никама пăхăнманлăх фрончĕ депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн 6.256.653 çын сасăланă. Ку вăл сасăланă мĕнпур çынсен 98,2 проценчĕ пулать.

Венгри халăхĕ хăйĕн правительствине, хăйĕн тăван партине—Венгрири ĕçсыннисен партине, халăхăн никама пăхăнманлăх фронтне çав тери хытă шанса тăни мĕнтен килет-ха? Мĕншĕн тесен халăх çак политика тĕрĕс пулнине, вăл ĕçсыннисен йышлă массисен пурнăç интересĕсемпе килĕшсе тăнине ĕçре курса ĕненчĕ. Унченхи суйлав иртнĕренпе тăватă çул хушшинче Венгри социализм строительствинче чаплă çитĕнÿсем турĕ.

Çак кĕске вăхăт хушшинче, класс тăшманĕсем хирĕç тăнă пулин те, çĕршыв хуçалăхпа культурăн пур облаçĕсенче те нумай малалла кайрĕ. Халăх тăрăшса ĕçленипе виçĕ çуллăх хуçалăх планне икĕ çул та пилĕк уйăхра тултарнă. Пилĕк çуллăх план та çавăн пекех ăнăçлăн пурнăça кĕрсе пырать. Республикăра ĕççĕрлĕхе пĕтернĕ, халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культура шайĕ питех те нумай ÿснĕ. Нумайрах та нумайрах хресченсем социализмла шултра хуçалăхпа пурăнма тытăнаççĕ, рабочисемпе хресченсен союзĕ çирĕпленчĕ. Пĕтĕм демократиллĕ лагерьпе пĕрле Венгри яланах мир политики тытса пычĕ, аслă Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе нихçан арканми тăванла союза çирĕплетсе пычĕ.

Суйлав кунĕнче Венгри халăхĕ мирлĕ социализмла строительство ĕçĕнче, пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешес ĕçре, мирпе демократи лагерĕнчи çĕршывсемпе алла-аллăн тытăнса, çĕнĕ çитĕнÿсем тума хатĕр тăнине кăтартса пачĕ.

Я. МАЗОР.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ майăн 21-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман. Разведка тăвас тĕллевпе çапăçусем пынă.

Ĕнер çĕрле Америкăн «В-29» йышши бомбардировщикĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Тэдон уездĕнчи мирлĕ ялсем çине вĕçсе пырса 600 ытла бомба пăрахнă. Хресченсем хушшинче вилнисем питĕ нумай, чылай çуртсемпе землянкăсене ишĕлтерсе пĕтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ÿкернĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Пенамдон районĕнче тăшмана хирĕç çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америка авиацийĕ Тэдон уездĕнчи Енвон водохранилищи çине каллех бомбăсем пăрахнă. Водохранилище çар объекчĕсемпе нихăш енчен те çыхăнса тăмасть.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

Америка авиацийĕ çаплах Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахать

ПХЕНЬЯН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ çаплах Çурçĕр Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахать. Майăн 17-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсен пысăк ушкăнĕ Хванхэ провинцийĕнчи Чэрён уездĕнчи ялсем çине икĕ сехет хушши тапăннă. Тĕрлĕ калибрлă бомбăсем пурĕ 300 ытла пăрахнă. 100 çын ытла вилнĕ. 120 çурта яхăн ишĕлнĕ.

Майăн 18-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре Америкăн 35 штурмовик-бомбардировщикĕ çак провинцири Солхэ уезчĕ çине вĕçсе пынă. Вĕсем темиçе çĕр бомба пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Майăн 19-мĕшĕнче Америкăн «В-29» йышши бомбардировщикĕсем Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Кончхон районĕ çине хаяррăн тапăннă. Тĕрлĕ йышши бомбăсем пин ытла пăрахнă. Хĕрарăмсем, ватă çынсем, ачасем нумай вилнĕ. Хресченсен çурчĕсем нумай ишĕлсе пĕтнĕ.

Майăн 20-мĕшĕнче ирхине 3 сехетре Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Учхонь хули районĕ çине бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Майăн 21-мĕшĕнче Америкăн 26 штурмовик-бомбардировщикĕ Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи Синьхо уезчĕ çине виçĕ сехет хушши тискеррĕн тапăннă. Америка летчикĕсем 150 ытла бомба пăрахнă, ялсем çине пулеметсенчен пенĕ.

Çав кунах «вĕçекен крепость» йышши 6 йывăр бомбардировщик Пхеньян çывăхĕнчи Чаран уезчĕ çине тапăннă. Кунта Америка авиацийĕ Сунань водохранилищи çине бомбăсем пăрахнă хыççăн шыв илнĕ пирки сиен курнă хресченсем землянкăсенче пурăнаççĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем пирки

ПЕКИН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Ĕçе лайăх пĕлсе тăракан çынсем кăтартса панă тăрăх, Америка делегачĕсем Паньмыньчжонри калаçусенче йышăнма тивĕççĕр сĕнÿсем кăларса тăратни çакăн çинчен калать: е Вашингтон Корейăпа Китайăн тыткăнри çар çыннисем хăйсем çинчен «тăван çĕршыва таврăнасшăн мар» тесе суйса каланине тăрă шыв çине кăларасран хăрать, е вăл перемири тăвасшăн мар.

Америка делегацийĕн сĕнĕвĕнчен çакă тухса тăрать: тыткăнри çар çыннисене, «ирĕке кăларас» тенĕ ятпа витĕнсе, хăйсен тăшманĕсен аллине памалла; репатриаци тĕлĕшпе ĕçлеме нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрнă комисси ĕçĕсене пÿлсе тăмалла, çак комиссирен тыткăнри çар çыннисене тытса чарас тĕлĕшпе Америка планне пурнăçламалли хатĕр туса хумалла; тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçĕсем туса пырассине пÿлсе тăмалла, пĕтĕм ĕç ячĕшĕн кăна пулса иртмелле. Çакă вăл перемири çинчен пыракан калаçусен никĕсне пăсать. Çавăнпа та Корейăпа Китай делегачĕсем çак сĕнĕве йышăнас çук.

Ĕçе лайăх пĕлсе тăракан çынсем çапла кăтартса параççĕ: Гаррисон панă 26 пунктран тăракан сĕнÿ тыткăнри çар çыннисене килĕсене таврăнма кансĕрлет, çак сĕнÿ вăл килĕшÿ тăвассине паллă мар вăхăта тăсма май парать.

Американецсем тыткăнри çар çыннисене киле таврăнма чăрмантарса тăма тăрăшнине Китайăн тыткăнра пулнă чирлĕ тата аманнă çар çыннисем нумаях пулмасть хăйсен тăван çĕршывне таврăннă хыççăн каласа панисем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Халăх çарĕн Главнăй командованийĕпе Китай халăх добровольцĕсен штабĕ 1952 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче тыткăнри çар çыннисем киле таврăнассине ырлани çинчен пĕлтернĕ. Тыткăнра пулнă çынсем каланă тăрăх, Америка влаçĕсем тыткăнри çар çыннисене ун çинчен нихçан та каласа паман. Америка представителĕсемпе Америкăн пропаганда машини тĕнчене пĕр хут çеç мар: çав пĕлтерÿ çинчен Америка контролĕнче тăракан мĕнпур тыткăнри çар çыннисене пĕлтернĕ, тесе каланă. Çав пĕлтерÿре киле, мирлĕ ĕçе таврăнакан тыткăнри мĕнпур çар çыннисене, вĕсен ÿчĕсем çине татуировка тунă-и е туман-и, вĕсем мĕнле те пулсан заявлени çырнă-и е вĕсем хăйсене тыткăна илнĕ çынсем хĕтĕртнипе ытти йышши мĕнле те пулин ĕç тунă-и е туман-и—пурĕ-пĕрех вĕсене ырă кăмăлпа йышăнса илесси çинчен каланă.

Перемири çинчен пыракан калаçусем 8 куна чарăнса ларнă вăхăтра тĕнчен Америка пропаганди саракан суя сăмахсем пирки уйрăмах сыхă пулмалла. Америка делегачĕсем перемири тăвассинчен хăрамаççĕ тата хăйсем малтан каланинчен чакмаççĕ пулсан, перемирие пĕр тăхтаса тăмасăр тума пулать. Америка пропаганди çавна пытарса тăрасшăн.

Перемири тăвасси çывăх тăрать. Америка делегачĕсем каялла чакмасан, сакăр пунктран тăракан, генерал Нам Ир панă сĕнÿ тăрăх перемири тума пулать. Çак сакăр пунктран тăракан сĕнÿ килĕшÿ тумалли никĕс, Корейăра перемири патне çитмелли чи кĕске çул пулмалла. Пĕтĕм тĕнче çавăн пек тума требовани лартать.

Францин Наци пухăвĕ Мейер правительствине шанманнине палăртнă

ПАРИЖ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Францин Наци пухăвĕнче правительствăна шанасси çинчен тăракан ыйту пирки сасăланă.

Финанс тĕлĕшпе хатĕрленĕ закон проекчĕн 2-мĕш статьине çирĕплетме, «административ аппаратне реорганизацилемелли ĕçсене пурнăçлас» тĕлĕшпе правительствăна пысăк полномочисем пама требовани лартнă май, премьер-министр Мейер правительствăна шанасси çинчен ыйту тăратнă.

Наци пухăвĕ паян правительствăна шанмалла мар тесе йышăннă. Правительствăна хирĕç 328 сасă, майлă 244 сасă пулнă. Рене Мейер, министрсемпе пĕрле, Наци пухăвĕн ларăвĕнчен тухса кайнă.

Кун хыççăн правительство ларăвĕ пулнă. Министрсен совечĕн членĕсем республика президенчĕн резиденцине пырса хăйсем вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ.

Правительство отставкăна тухасси финанспа экономика тĕлĕшĕнчен пысăк йывăрлăхсем тухса тăнинчен, çĕршывра экономика ĕçĕсем йывăрланса çитнинчен килнĕ. Çакна хирĕç Рене Мейер правительстви нимĕн те тума пултарайман.

Правительство финанс тĕлĕшпе хатĕрленĕ çĕнĕ закон проекчĕ, уйрăмах çак проектăн правительствăна уйрăм полномочисем парасси çинчен калакан иккĕмĕш статьи, халăха хытă тарăхтарать. Çакăн пирки те Наци пухăвĕн нумай депутачĕсем, вăл шутра сылтăм депутатсем те, çав закон проекчĕсене çирĕплетессишĕн сасăлама хăйман. Вĕсем, коммунистсемпе пĕрле, правительствăна шанассине хирĕç сасăланă.

США, АНГЛИ ТАТА ФРАНЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕН ПУÇЛĂХĔСЕМ ТĔЛ ПУЛАС УМĔН

ПАРИЖ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Июнь уйăхĕн варринче США, Англи тата Франци правительствисен пуçлăхĕсен канашлăвĕ пуласси çинчен паян официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Канашлу пухăнасси çинчен паян Наци пухăвĕнче премьер-министр Рене Мейер пĕлтернĕ.

Канашлу пухăнасси çинчен çавăн пекех Вашингтонра тата Лондонра пĕлтернĕ. Канашлу Бермуд утравĕсем çинче пулмалла теççĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, «виççĕн тĕл пуласси не» пуçараканĕ президент Эйзенхауэр пулнă.

Мейер каланă тăрăх, США, Англи тата Франци правительствисен пуçлăхĕсем тĕл пулассин тĕллевĕ вăл—«Тăватă держава конференцийĕ пынă вăхăтра хускатмалли ыйтусем тăрăх çак правительствăсен пĕрлĕхлĕ шухăшне палăртасси пулать».

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНТНЕ ИРАНРАН КĂЛАРСА ЯМАЛЛА ТУНĂ

ТЕГЕРАН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Фатеми майăн 19-мĕшĕнче пресс-конференцире çапла пĕлтернĕ: «тăтăшах тĕрĕс мар, Шахиншах государствин интересĕсене хирĕçле сведенисем парса тăнăшăн» Иран правительстви Америкăн Ассошиэйтед Пресс агентствин Иранри представительне виçĕ кун хушшинче Иранран тухса кайма хушнă.

Бирма çарĕсемпе Чан Кай-ши бандисем хушшинчи çапăçу

ПАРИЖ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин Рангунри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бирмăра правительство çарĕсемпе Чан Кай-ши бандисем хушшинче халĕ те хаяр çапăçусем пыраççĕ. ООН Чан Кай-ши бандисене хĕçпăшаллайтарасси е вĕсене Бирмăран илсе тухса каймалла тăвасси çинчен решени йышăннă пулсан та, Чан Кай-ши бандисем Бирмăран çаплах тухса каймаççĕ, Бирма çарĕсене хирĕç тăраççĕ.

Майăн 18-мĕшĕнче, тесе пĕлтерет Франс Пресс агентстви, Шань княжествин кăнтăр пайĕнче, Кэло çывăхĕнчи Калухайра çапăçу пулнă. Чанкайшистсем каялла чакнă, çапăçу вырăнĕнче 5 виле, аманнă 20 çын юлнă, çавăн пекех боеприпассем тата документсем пăрахса хăварнă.

ЛОНДОН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Рангунри корреспонденчĕ Бирма çар министерстви пĕлтерине парать. Унта каланă тăрăх, Кенгтунг районĕнче Бирма правительствин çарĕпе чанкайшистсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Монг Пью Аун хули районĕнче те çапăçусем пыраççĕ. Унта Бирма çарĕсене чанкайшистсен 2 пин çынлă çарĕ хупăрласа илнĕ. Бирма çарĕсем пĕр уйăх каярах чанкайшистсене хуларан хăваласа кăларнă пулнă.



Пирĕн республикăри паллă спортсмен Р. Бикчурин ултă автономиллĕ республикăри çăмăл атлетсен Шупашкарта пулнă ăмăртăвĕнче пысăк çитĕнÿ турĕ. Вăл 5.000 метр чупмалли ăмăртура мала тухрĕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Р. Бикчурин (малта пырать) 5.000 метр чупнă чухне.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Арçынсен баскетбол командисен Европăра мала тухмалли ăмăртăвĕ

1953 çулхи майăн 24-мĕшĕнче Мускаврa, «Динамо» спорт обществин стадионĕнче, арçынсен баскетбол командисен Европăра мала тухмалли ăмăртăвĕ пуçланать. Кун пек ăмăрту кăçалхипе саккăрмĕш хут ирттереççĕ.

Европăра мала тухмалли ăмăртăва çак çĕршывсен сборнăй баскетбол командисем хутшăнаççĕ: Бельгин, Болгарин, Венгрин, Германин, Данин, Израилĕн, Италин, Ливанăн, Румынин, ССР Союзĕн, Финляндин, Францин, Чехословакин, Швейцарин, Швецин, Югославин.

Пĕтĕм тĕнчери баскетбол федерацийĕ (ФИБА) хушнипе ССР Союзĕн баскетбол секцийĕпе организацилле комитет ăмăрту ирттермелли йĕрке палăртса хунă.

Командăсене 4 подгруппăна уйăраççĕ те майăн 24-мĕшĕнче 25-мĕшĕнче тата 26-мĕшĕнче малтанхи вăйăсем пулаççĕ. Подгруппăсенче пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăн йышăннă командăсем финалти вăйăра пĕрремĕш вырăнтан пуçласа саккăрмĕш вырăн таран йышăнма пултаракан ушкăна кĕреççĕ. Подгруппăсенче виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăн йышăннă командăсем финалти вăйăра тăххăрмĕш вырăнтан пуçласа вунулттăмĕш вырăн таран йышăнма пултаракан ушкăна кĕреççĕ.

Финалти вăйăсем майăн 28, 29, 30, 31-мĕшĕсенче тата июнĕн 2, 3, 4-мĕшĕсенче пулаççĕ. Финалти вăйăра та командăсем кашнипе пĕрер хут тĕл пулса выляççĕ.

Ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă командăна Европа чемпионĕн ятне параççĕ. Европа чемпионĕн ятне илнĕ командăна приз тата диплом парса, командăри çыннисене—ылтăн медальсемпе дипломсем парса награждаççĕ.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннă командăсене те призсемпе дипломсем, çав командăсенчи çыннисене кĕмĕл е бронза медальсем тата дипломсем парса награждаççĕ. (ТАСС).

Фельдшер пункчĕ

ВĂРМАР. Ĕçсыннисене медицина пулăшăвĕ парасси çулран-çул лайăхланса пырать. Халиччен Эçпепе ялĕнче трахпункт кăна пулнă. Халĕ кунта фельдшер пункчĕ уçрĕç.

Фельдшер пункчĕнче медицина пулăшăвĕ пама кирлĕ хатĕрсем çителĕклĕ. Е. Александрова фельдшерица чирлĕ çынсене çийĕнчех тивĕçлĕ пулăшу парать.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!

Центра тата вырăнта пичетленсе тухакан хаçатсене 1953 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма çырăнăр.

Хаçат-журнал илсе тăма «Союзпечать» уйрăмĕсенче тата кашни почтăра çырăнма пулать. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем заводсемпе фабрикăсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—майăн 24-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «Вей, ветерок». Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — майăн 24-мĕшĕнче пур сеанссенче те «Адмирал Ушаков». Майăн 25-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Суворов», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Случай на ярмарке».

Шупашкар хулинчи Гастелло урамĕнче, 12-мĕш çуртра, пурăнакан Вадим Иванович Кобылин арăмĕнчен—Шупашкар хулинчи Константин Иванов урамĕнче, 5-мĕш çуртра, пурăнакан Генриэта Матвеевна Мокеевăран уйрăлма ĕç пуçарнă. Ĕçе Чăваш АССР-ĕнчи Шупашкар хулинчи 1-мĕш участокри халăх судĕнче пăхса тухаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01137. Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.